**Михаил Сунтал**

# *КУН ХЫÇÇĂН КУН*

**ШУПАШКАР - 2010**

ББК К84.09 (Чув) 6-51
УДК 89471.344
С 101

Сунтал Михаил Кун хыççăн кун. Сăвăсен пуххи. Шупашкар, 2010. – 99 с.

Ку сăвăсене автор 2010-мĕш çул умĕн çырнă. Сăвăсен пуххи «кун хыççăн кун» тулса хăпарса пынă. Вĕсене мĕнле курнă ку тĕнчене, çапла çырнă тесен те юрать. Çавăнпа та вĕсенче, тен, чăваш шухăшĕпе чунĕ палăрать.

М. Сунтал. 2010

* * *

Юр çунă чух ку шухăш кĕчĕ...
Ăçта, тет, пулнă ку чăваш?
Мĕн-ма халь тин чăн чăваш ячĕ
Нихçан илтмен пек янăрать?
Ăçта çӳренĕ эс, тăванăм,
Пиншер çулсем тăршши чăтса?
Вара сана, тет, каламан-и,
Ăçта каян, чăваш, тата?
Мĕн-ма сана чĕнсе «пăлхар» пек,
Мĕн-ма ят илнĕ эс, «сăвар»?
Таçта пулса тет-и «ар» пек те,
«Ĕçхĕл» те, «агаксем», «пăртас»...
Такам та пулнă эс, куратăп,
Хăвăн ятна çеç кăтартман.
Мĕн-ма тесен, эпĕ шутлатăп,
Хăй чăн ятне калаттарман!
Чăн ячĕ ун – чăваш! Пит вăрттăн
Хăйне упранă çав ачаш.
Вăхăт çитсен вара каланă –
Ак, эпĕ вăл, эпĕ чăваш...
Чăваш тесе каласанах
Тĕнче те Турă пек çуталнă.
Чăваш килсен, тĕнче пулать,
Тĕнче татах аталанать...
Юр çунă чух ку пулса иртрĕ...
Тĕнче пĕтсе килсен чылай
Хăйне таçта пытарнă чун та
Каллех чăваш пек тыткаларĕ,
Çак тĕнчене те ыталарĕ,
Илес пек тăчĕ хăй çине...
Чăваш-ха эп,.. чăвашччĕ эпĕ
Пиншер çулсем те каярах.
Çапла пире чĕнсеччĕ... Халăх

Таçта «шыв пуçĕ» пулнă чух.
Пире «патша» тесе пăхатчĕç
Çăлтăрсене шутланă май.
Эпир, тен, пулнă Турă хамăр,
Мĕн ахальтен-им халĕ те
Хĕвел те пур, тесе тăратпăр.
Эпир çав чаплă вăхăта
Халь тин каллех аса илетпĕр...
Эпир чăваш халь, чăн чăваш,
Эпир каллех шыв пуç пулатпăр!
«Шăваш» та халь, «субар» та, тен,
«Шумер» та, тен, кăштах «пăлхар»,
Тахçан, тет, пулнă эпĕр «сăхăт»,
Унтах «пӳлейĕ» те «пӳлерĕ»...
Нумай пит сăнлă-çке, апай,
Эпир такам та пулнă май.
Çапах та пулнă эпĕр халăх!
Пĕр халăх пек чăмăртанса
Тĕнче хĕрне çитсе çĕкленнĕ...
Мĕн-ма тесен чăвашшăн çуннă,
Чăвашшăн çуннă ĕмрипех!
Çав чăн ята эпир упранă...
Чутах тытатчĕ вĕт усал!
Тен, халĕ те тытса пăвасшăн...
Анчах мĕн чухлĕ халь чăваш,
Халь вĕсемпе эс мĕн тăвайăн.
Чăваш тăрать çанталăк пек.
Кирек мĕнле килсен те вăл,
Пĕрех ăна халь лайăх теççĕ...
Шур юр çăват-ха, ан хăра...
Тен, çавăнпа чăваш çĕкленчĕ
Авалхи пек, юр çунă пек...

* * *

Чăнах та, пур-ха шур хĕрсем –

Шап-шурă уйăх пек пăхаççĕ...
Тепĕр чухне сăмах хушаççĕ –
Илтсен те калăн, Тур тесе...
Турă пекех, чăнах, лараççĕ –
Тур тесенех, пуçна хăть çап!
Мишша çинчен, çук, шутламаççĕ,
Вĕсем шутлаççĕ кил çинчен.
Тин çеç вĕсем килтен халь çитнĕ,
Килтех çӳрет пуль шухăшĕ.
Унтах килтерĕш те, каччи те...
Унтах выртать вĕсен чĕри!
Тен, çавăнпа та шутламаççĕ
Мишша çинчен пĕр шухăш та.
Вĕсенĕн чĕрисем çӳреççĕ
Пачах та урăх сукмакпа.
Тен, çавăнпа эп çилленместĕп.
Эпĕ пурри вăл мур тĕпне!
Енчен те шур хĕрсем килеççĕ,
Кунта пулать хăй пĕр тĕнче!

* * *

Вăхăт иртет, иртнĕçемĕн,
Ку çут тĕнче çутăлать.
Тин çеç утса пынăçемĕн,
Çул йывăççи курăнать.
Эс ун çине пăхсассăн,
Калăн, маяк тесе.
Хăвăн çулна тупсассăн,
Тайăн пуçа, тав тесе.
Вăхăт иртет, иртнĕçемĕн,
Çитĕн çитес çĕре.
Мĕн тĕлленни çитнĕçемĕн,
Ман савăнать чĕре.
Мĕн чухлĕ пуль эпĕ утнă
Çак çĕр çинче ирпе.

Çул хĕрринче йывăç курнă –
Çав пулăшать пире!

* * *

Хĕл ларчĕ пуль. Çăвать шур
мамăк.
Мана çуса вăл тасатать.
Йĕри-тавра мĕнлеччĕ тамăк –
Ак, халь вара йăлт шуралать!

Утма кунта малтан май çукчĕ,
Пылчăкланатчĕ ман ура.
Паян вара ман кăмăл тулчĕ –
Ку утма çул шап-шур, таса...

Халь такăнсан та ним те мар пек,
Ӳксен ӳкетĕн юр çине...
Кама валли çуса тултарчĕ
Вĕçĕ-хĕррисĕр шур тĕнче?

* * *

Чăваш поэзийĕ çул тăршшĕн
Каларĕ пулĕ пин юмах.
Тахçан поэт та çакă çĕршĕн
Каланă пулĕ пĕр сăмах.
Ак, халĕ те поэма ӳкрĕ
Ман куç умне пĕр тĕм пулса.
Сивĕ çиле тепре вăл тӳсрĕ
Пĕр пĕчĕк çеç кăвайт туса.
Çунать пĕр тĕм поэма евĕр,
Калать пуль хăйĕн сăмахне...
Çу кунĕсем килсен, ак, тепĕр
Калать сăмах – урăххине!

* * *

Пĕр сар купа.
Выртать аранçă...
Пырса кĕме те çук унта!
Тен, çавăнпа иртеп айккин?
Тен, эпĕ хам та çулçă майлă
Вĕçме пуçлатăп ыранран?
Мĕн-ма тесен, эп те ӳкетĕп,
Эп те пулатăп – пĕр купа!

* * *

Килсе туртать пĕр хĕрача пирус,
Вăтаннă пек тăвать.
Чăнах та, çынсемпе çӳренĕ чух
Пирус тени те аптратать.
Сар тĕм тени, çук, шарламасть,
Мăкăрланать çеç тĕтĕмĕ...
Сар хĕрачи паттăрланать.
Вăл халь пирус туртать вĕт!
Чăнах та, питĕ кулăшла
Килсе тухать ку шĕшлĕн.
Ку питĕ, чăн та, чăвашла –
Пытарăнса туртать ку!

* * *

Тахçантанпах шутлатăп эпĕ
Çăлăнмалли меслет çинчен.
Тепĕртакран, сисетĕп, эпĕр
Вилсе каятпăр ним те мар.
Мĕн-ма тесен, апат çимелĕх
Çăкăр-тăвар та ман çукрах...
Тепĕр чухне эпир чĕнместпĕр –
Калаçаймастпăр вĕт чунтан...
Тĕнче халь хĕстерет хăватлăн,

Вăл хăйĕн пек тутарттарать.
Эпир тепле пулсан та чаплă
Пире пĕрех парăнтарать...
Тен, çавăнпа хирĕç тăрас та
Хирĕç тăрса та вăй пухас,
Тесе шутлатпăр халăхпа...
Анчах та халăх – ху кăна –
Унта та тем пек хăраса,
Пăхса тăратăп чунăмпа.
Тепĕр чухне, тепĕр чухне
Эп те пулатăп пулĕ харсăр.
Çыратăп тем, тем шухăшлатăп –
Пĕрех пĕтессĕм вĕт килмест!
Çак тĕнчене усал килсен те,
Пире тытса хыт хĕстерсен те –
Çак тĕнчене çăлас тепех!

* * *

Шăппăн-шăппăн, питĕ шăппăн
Çын тени те илтейми
Вăл калать чĕрийĕ шăннăн
Пĕр сăмах. Илтетĕн-и?
Илтнĕ пек те тепĕр чух.
Чун-чĕре çĕкленнипе
Ху калатăн пуль кăштах,
Тăрса пăх-ха эс шăпрах!
Тен, çавна илтетĕн те!
Эс каларăн, илтрĕн-и,
Е илтем пек турăн-и?
Шăппăн-шăппăн, питĕ шăппăн
Шăвăнать ку шур тĕнче.
Кам илтет, тет, пурăнать,
Ма тесессĕн – хăй калать!

* * *

Ку хуçалăх çулĕсем
Пулчĕç вĕç-хĕррисĕр.
Ĕçсене те тунăçем
Эпĕр те ӳссе-тĕр!
Эпĕр халĕ пĕр хуçалăх:
Ман сăнлах пуль халĕ те
Пăхса тăчĕ шурă çурт.
Ман пекех пуль ӳсрĕ сад...
Е эп пултăм вĕсем пек?
Эп çавна куратăп:
Ку хуçалăх çулĕсем
Кайрĕç çăлтăрсем пек...

* * *

Кĕрет сăрхăнса кăвак çутă,
Ӳкет урайне сăрхăнса.
Мĕнле лайăх пуль урам тăрăх
Шап-шур юр çинче йĕр тума...
Куран та, çав çутă чунран пек,
Таçтан чĕререн сăрхăнать...
Килте ларакан ачана
Мĕн-ма çутатмастăр тек?
Тухса та чупасчĕ, чăнах та,
Пуласчĕ çав пĕчĕк ача.
Анчах та килтех эп ларатăп,
Ларатăп çавна ас туса...
Кĕрет сăрхăнса кăвак çутă,
Кĕрет вăл йăлтах ман чуна.
Кам халĕ çутта ас тăвать-ха,
Çав пулĕ ларать çуртра!

* * *

Юр çăвать, çăвать, çăвать
Питĕ лăпкăн, майĕпен...
Çунăçемĕн мĕн тăвать –

Ман чуна çăвать вăл!

Эпĕ ĕнтĕ халь таса.
Эп таса халь çирĕк пек!
Мĕн тума килсе ларса,
Вăл çак çул маякĕ пек?

Эпĕ утрăм. Тĕрĕс çул
Çирĕкĕ кăтартрĕ.
Хам та эпĕ темĕн чуль
Улшăнса та пытăм...

Ача чух ача пекех –
Хам та эпĕ пĕр мулкач!
Сисеймерĕн, пĕр çĕркаç
Утса çитрĕм чиперех.

Юр çăвать, çăвать, çăвать...
Манăн йĕр юлать-ха.
Урăх ним те кирлĕ мар –
Эпĕ халь чупап-ха!

* * *

Хура халăх, тетчĕç. Ăнланмастăм.
Эп хура-и, теттĕм. Хамăрта
Эпĕ курнă шурă тум кăна...
Пурпĕрех эп çав ята манмарăм,
Хура халăх пултăм тăтăм... Кур!
Кур-ха, кур. Халь тин хама уйрап та,
Хура çын пулса тăрап та...
Тĕлĕнтерчĕ ку тĕнче. Мĕн ĕмĕр
Çӳресе чăваш пулса тахçан...
Пĕринче çапла янрарĕ уçлăх.
Хура халăх, эй! Тăрсам çӳлте!

Мĕншĕн эсĕ хура çын пек хурлăн
Хăвна ху пусартăн-им тата?
Эсĕ мĕн, чура-и пулса курнă,
Çĕнтермен-им эсĕ пурнăçра?
Ку самант, ак, маншăн пулчĕ
хурçă.
Эпĕ туйрăм, эп хура, чăнах!
Эп хура! Чăн турă Хор пек эпĕ
Хăрататăп тĕнчене пăхса...
Кам курать мана, ку, тейĕ, Турă!
Çавăнпа та эп пĕлмес ăна!
Çавăнпа пуль чăвашсем çӳреççĕ
Пĕр пĕлмесĕр турă мĕнлине.
Хура халăхăм, ăçта халь эсĕ,
Халь ăçта сан Турă, пур-и вăл?
Манăн Турă пулчĕ тăчĕ халăх.
Хура халăх манăн Турă халь!

* * *

Ан шутла, лайăх çыртăм тесе,
Шур пуçна çӳлелле ан кăнтсам.
Эсĕ çырнă пĕр çĕр йĕркере
Пĕр йĕрки тĕрĕс пултăр кăна...
Çавăн чух йăлтăрать ку тĕнче,
Çавăн чух эпĕ хам та йĕркелле!
Çук, ан пултăр кунта пĕр йĕрке
те,
Тен, пĕр сăвă та çук лайăххи...
Пурпĕрех, тем пулса иртнĕ пек,
Темĕн пулчĕ вĕт çак тĕнчере!
Çак тĕнче пурпĕрех сăвăланчĕ,
Хитрех мар пулĕ те, пурпĕрех,
Пĕр ача пĕр йĕрке çеç каларĕ –
Йĕркеленчĕ тĕнче çавăнтах!

* * *

Нимле чару та çуккă сан –
Пĕр эсĕ ху кăна!
Мĕн каласса калатăн та –
Тинех пулатăн ху!
Эс ху та ту, тусан пулать.
Тусан, ача та пур!
Тен, çавăнпа тепĕр чухне
Туса пăхатпăр та...
Эх, тĕлĕнетпĕр, мĕн, тесе...
Темскер туса хурсассăн та,
Ĕç тăваканĕ эс кăна.
Пĕр чараканĕ те, тен, ху...
Çак икĕ япала пулсан,
Çак иккĕне пĕрлештерсен –
Пурнăç пулать вара!

* * *

Ку тĕнчере – чăн вырăнта –
Кашни хăйне шырать.
Акă чечек сан умăнта –
Хăйне мăнна хурать.
Мĕн-ма тесен, вăл – вырăнта –
Хĕвел çинче ӳсет.
Ун патнелле кашни кунах
Пыл хурчĕ те вĕçет...
Пур вырăн – кашни çыннăн та –
Вăл та хĕвел çинче.
Кашни пур япала кунта
Шырать хăй вырăнне.
Ман вырăн çук теме те çук.
Çук, хĕсĕр мар тĕнче!
Хăвна вали эс вырăн ту
Çак сар хĕвел çинче!

* * *

Хурасем таçтан килнĕ пулать.
Хурисем те, темле Хураçка...
Хура тинĕс те пур-ха, Кура,
Е, пур тет-и, таçта Хурасан...
Хурасем халь те пур-ха вĕсем...
Хамăр та тепĕр чух хăраса,
Хура халăх пуль эпĕр, тесе...
Такам хунă пулать çапла ят.
Хурритсем, тет, пулса-и тата?
Кирек мĕн каласан та кунта
«Хор» тени илтĕнет аякран.
Тахçан пулнă, тет, турă – Хăран.
Тен, унран тухса кайнă – Коран?
Пĕрлештернĕ пулать çав пире
Хура халăх туса «хурараn».
Халь тин ĕнтĕ пĕлместпĕр ăна,
Пĕр темле хура ят çеç юлса...
Хура халăх тесе каласан,
Çĕкленет ман чунра темĕскер!

* * *

Ăçта-ха çӳрет ман чăваш,
Эх, ытла та халь эсĕ йăваш.
Тин кăна туйса илтĕн хăвна
Халăх евĕр хăватлă чунпа...
Çавăнтах, çавăнтах урăхла
Каласа та хуран çавăрса.
Эсĕ мĕн, пулнă, тет, пĕр пăлхар,
Эс пулса тет-и, шурă сăвар...
Эсĕ пулнă пулех, тен, патша та...
Анчах эсĕ халь тин чăн чăваш!
Мĕн тесе вара эс пăрахан
Халăх евĕр хăватлă ятна
Эс чăваш! Эс чăваш! Чăваш пек

эсĕ пул!
Чăваш пек ман пуласчĕ-ха та!..
Пушкин хăй те çапла каласа,
Тен, Толстой та чăваш пек пулса...
Чăваш пек шутласан. Чăн çынсем
Халь те пур-ха вĕсем... Ан хурлан!

* * *

Мĕн асăрхатăн пурнăçра?
Çуран пĕр çын та çук!
Машин çинче те ярăнса
Пĕтетпĕр халĕ. Кур!
Мĕн чухлĕ япăх та чăлах
Хăйне туять кунта.
Мĕн-ма тесен, машин нумай,
Пĕтерчĕ çав çынна...
Эс тух кунта,
Утар пĕрле,
Çут çул тени çук мар!
Пĕрле утса та савăнса
Эпир чăн çын пулар!

* * *

Хĕрача çинчен çырмасăр
Кун иртмест-ха ман.
Мĕнле ĕнтĕ каç çитмесĕр
Пурăнан пĕччен.
Куçна уç-ха, кур-ха, кур!
Тăпăл-тăпăл хĕрача –
Пĕвĕ ярт, куçĕ таса,
Купарчи те пур тата...
Пур ун кăкăрĕ... Унта
Ман чĕре те пурăнса.
Кашни çын хăй асĕнче
Çывăрса кăкăр çинче....

Хĕрача çинчен çырмасăр
Мĕнле чăтăн-ха вара?
Çавăнтах ман чун чарусăр
Пурăнать халь те тата.

* * *

Турă тесе эп шутланă
Тĕнче тăвакан пĕр вăя.
Пĕр уйăх та пĕр хĕвел пек
Тахçан, тет, вĕсем çаврăнса.
Тен, çавăнпа та каланă,
Пĕр икĕ сăмах савăнса.
Тен, çавсенче, чăн та, курнă
Хăйсенĕн çулне тӳпере?
Чăн та, пĕр уйăх, хĕвел те
Пулнă «То» пек те «Ра» пек.
Тен, çавсенчен, чăн та, юлнă
Турă, тени халăхра?

* * *

«Тешуб», «Тешуб» тени тахçан
Пĕлтернĕ тет Египета.
«Ч» калама пĕлменнĕрен
Каланă хунă «т» тесе.
Унтан, «б» сасă та «б» мар,
Ун вырăнне каласчĕ «в».
Чăнах та, тепĕр чух, чухла,
Сăмах та улшăнать пĕрмай.
«Тешуб» тесе каланине
Вуласчĕ тĕрĕсрех – «Чешув».
«Чешув», «Чешув» каланисем
Чăнах çук мар ку тĕнчере.

* * *

Ан васка, тет, ман юлташ
Кĕнеке тумашкăн.
Эс вуларăн, лайăх, тен,
Пурпĕрех тăхта-ха...
Чăн та, мĕн-ха, мĕншĕн эс
Ытла пит васкатăн?
Кирек мĕнле хутăн та
Кăшт кивелмелле, тет.
Ун чухне вара пĕлен,
Кирлĕ хут-и ку?
Кирлĕ пулчĕ тĕк, илен,
Ыйтăн выçă çын пек.
Кирлĕ хут вăл питĕ кирлĕ,
Кĕнеке те выçă!
Тепринчен каллех ыйтап –
Мĕн чухлĕ кивелтĕн?

* * *

Çеçпĕл утать хĕллехи урампа,
Çийĕнче гимнастерка кăна.
Çӳçĕ ун шăннă шурă юрпа,
Сăнĕ калать пĕр сăвва.
Çеçпĕл, ăçтан эс, каятăн ăçта,
Мĕншĕн эс сăвă калатăн?
Пĕр сас та памарĕ Çеçпĕл мана.
Тен, ман сасса вăл илтмерĕ?
Иртрĕ çул тăрăх çамрăк пекех,
Утти ун, чăнах та, тĕнче пек!
Ирттĕр-ха, терĕм, килтĕр тата,
Çеçпĕл килни – аван вăл!
Юлтăм хыçра, Çеçпĕле сăнаса,
Мĕн эс туса халь тăратăн?
Кайрĕ хуçалăхăм ман саланса,
Хам та халь эп Мишук мар

пуль!..
Иртрĕç иккен пирĕн хăвăрт çулсем,
Çеçпĕл те иртрĕ çут сăввăн.
Эп тăрса юлтăм шур сăвă пекрех,
Тен, эпĕ, чăнах та, шур сăвă?

* * *

Юр ӳкнĕ тĕлте урăх нимĕн те
çук...
Пĕр йытă чупса, тен, иртнĕ?
Унăн йĕрри курăнать тĕрĕ пек,
Çав тĕрĕпе эпĕ çитнĕ.
Чăн та, йĕрсем çуккă мар пуль
кунта.
Акă, мулкач та пулнă!..
Вăл тĕрĕслет пуль ку пахчана.
Мĕн-ха кунта, тет, юлнă?
Эпĕ те ĕнтĕ пăхап тĕлĕнсе –
Манăн пахча питĕ пушă!..
Час, акă, эп те çав йытă пекрех
Иртĕп юр çунă тĕлтен те...
Иртĕп тĕ юлĕ манран та пĕр йĕр.
Килĕ мулкачĕ тепре...
Мĕн-ха, ку, тейĕ, çын йĕрри!
Мĕн тунă кунта вăл халĕ?
Чăн та, мĕн турăм-ха эпĕ кунта?
Эпĕ нимех те тумарăм.
Куртăм, юр ӳкнĕ пĕр вырăнта
Пĕр çын хăй йĕрне хăварнă...

* * *

Тĕксĕм, тĕтреллĕ, кичем...
Килчĕç кĕрхи кунсем.
Ӳкрĕ шур юрĕ кăштах –
Пулчĕ чуна çăмăлрах!

Кĕтрĕмĕр эпĕр хĕле...
Хĕл ларасси нумай мар!
Хĕл ларсанах пĕчĕк пек
Эп ярăнап çырмара...
Эх, çав çырма-тăвайкки –
Пур-ши ун пек сĕвекки?
Куç умĕнчех ярăнни,
Чун çумĕнчех савăнни...
Халĕ те, акă, кăштах
Эп ярăнса пăхап...
Çук çав, çукрах юр тени,
Çуккă çырма текенни...
Пурпĕр, пĕрех эп чунпа
Чупăп çав шур çырмара.
Тĕксĕм, тĕтреллĕ пулсан та
Кун пуçланать çавăнпа.

* * *

Мĕн-ма калаççĕ: пăлхартан
Эпир пулса кайса...
Ниçтан та эпĕр пултарман –
Эпир пулса ялан!
Пăлхар пекех, тен, сăвар пек
Эпир те пулнă авалтан.
Чăваш, анчах, кăшкăрашман,
Вăл никама та хăратман...
Тен, çавăнпа историксем
Асăрхаман та чăваша.
Вĕт халь те, чăвашсем ăçта,
Тесе ыйтсан ку уçлăхран.
Пĕр сас та илтĕнмест вара –
Йĕри-тавра чăваш тăрсан та!
Чăваш нихçан та шарламасть,
Хăй пуррине вăл кăтартмасть.
Çын пул-ха, тет, те пурăнать,

Ăна вара никам курмасть.
Вăл никама та курăнмасть!
Вăл сывлăш пулĕ, тен?
Тен, çавăнпа историре
Ун йĕрĕ палăрмасть.
Ку, питĕ пысăк шухăш пек,
Ку, пирĕн вăрттăн çул.
Чăваш ăçта, тесе ыйтсан,
Турă калать – пĕлмес!
Турă пекех вăл, кам пĕлет,
Ниçта та курăнмасть.
Чăваш, тет, курăнсан вара,
Вара – тĕнче пĕтет!

* * *

Юр çине ӳкеççĕ сарă çулçăсем...
Ах, ăçта-ши пулнă сар кунсем?
Мĕншĕн тăкăнман-ха ку чие?
Мĕншĕн ларса юлнă кĕр çине?
Юр çине ӳкеççĕ сарă çулçăсем...
Татăлса ӳкмелĕх кун çитсе вĕсен.
Халь тин вăхăт çитнĕ пуль ӳкме –
Юр çинче выртма та пĕлмелле!
Хăйне майлă куç пек, тен, пĕр
тĕкĕр пек
Халь хăйне кăтартрĕç юр çинче.
Питĕ кĕрхи майлă, питĕ чăн
хитре...
Эх, ӳксен ӳкесчĕ юр çине!..
Юр çине ӳкеççĕ сарă çулçăсем...
Вĕсен кунĕ иртнĕ, халĕ çук вĕсем.
Иртсе кайрĕ хĕл те, иртрĕ юр
çуни...
Çулçăсем çуни çеç юлчĕç куç умне.

* * *

Хура вăрмансем халь те кусç
умĕнче...
Хура пек темле сукмаксем...
Вĕсем тăрăх утрăм хура шухăшпа,
Хама темле куртăм – аякран.
Эп пĕчĕккĕ-мĕн. Юманпа
танлашсан,
Чăнах та, курап пакша евĕр.
Хăпарăп та кайăп чи çӳлĕ çĕре,
Пакша пек çӳретĕп вĕçсе!...
Анчах та çукрах çав, эп
пĕчĕкрех...
Утса та пыратăп хура сукмакпа.
Хура çеç вăрман, хура çеç сукмак
Юлса халĕ ман чунăмра...

* * *

Юнран та ыйтсан, мĕн калăттăн
эс?
Чăнах та, эп вăрçă вăрçман.
Мĕн авалтан эпĕр çĕр ĕçĕнче.
Тен, çавăнпа курăнман?
Кунта темĕн пур. Чăнах та, чăваш
Ытла çĕр пекрех эс йăваш...
Мĕн-ма тесе ыйтăн – пĕлĕн вара –
Чăваш вăл çĕр евĕр чĕлхеллĕ!
Ыйтсан та чĕнмест, парсан та
илмест.
Хăй тĕллĕн вăл халь пурăнать...
Тен, ĕлĕк те пулнă вăл çĕр
майлăрах?
Ана сухаланă, çинĕ пĕрмай,
Анчах вăл пĕр сас кăларман!
Тĕнче вăрçăнса хытă тăнă чухне

Вăл çăкăр пулса выртнă çын
умĕнче.
Пăлхарĕ те мĕн, тен, сăварĕ пĕрле
Мухтаннă пулать çăкрипе.
Чăваш шарламан, йăлтах вăл
çĕрленнĕ.
Кам халĕ çук, тет, çĕр çинче?
Çĕрне вара маннă...

* * *

Такам пулса эс çӳресен те,
Такам пекех, тен, курăнсан та –
Тепĕр чухне пăтăрмахра
Хăвна кăтартăн мĕнлине...
Чăнах та мар-и çак сăмах...
Такам пулса та курăннă,
Темле ятпа та пурăннă...
Халь тин чăваш пулса тăрать!
Авалхине ас илтерет...
Пиншер çулсем те иртсенех
Алла илет хăйĕн ятне...
Чăваш ятпа вĕт вăл çӳренĕ
Икĕ çырма тăрăхĕнче.
Эх, пĕтрĕç унăн килĕсем...
Пĕри пăлхар, тепри сăварччĕ,
Ĕçхĕл тени те пулкалатчĕ...
Çунса та кайрĕç вăрçăра...
Вара мĕскер тăрса юлать?
Вара чăваш хăех килет,
Хăй пуррине ас илтерет...
Чăвашлăх никĕсĕ çинче
Тĕнче тепре çех çĕкленет,
Китай енче çĕкленнĕ пек,
Кавказ çинче кĕрленĕ пек...
Çавна аса илетĕп эп,

Пулассине те курнă пек.

* * *

Уçă çил çĕкленчĕ пек:
Эп утса пыратăп...
Чăн та, лайăх-çке иккен
Хăвăн пек пулмашкăн...
Ал-ура та çăмăлрах,
Сывлăшĕ пит уçă.
Ак, хĕвел те тухнăран,
Эп татах çĕклентĕм.
Халь вĕçетĕп чăннипех.
Эп утма пĕлетĕп.
Утса пынă чух çӳлте
Йĕр ӳкертĕм мар-и?

* * *

Пĕрре çавăрса çапсан, ак,
Юлать-и шăмму-шакку?
Йăлтăртатать çул асамĕ,
Пăр витнĕ йăлтах, якку!
Утрăм пĕрех, шăватăп
Пырсан та пырсан коньки пек.
Эп, чăн та, кăштах хăратăп,
Пĕтетĕп вĕт ӳксенех...
Чăнах та, сисмерĕм те – ӳкрĕм,
Эп ӳкрĕм чипер пынă чух.
Эх, ку çул та-мĕн пулчĕ чӳклĕ,
Ку çул та хăш чух питĕ шух!
Ан утăр, атьсем, çул ултавлă.
Вăл кантăк пекех ялтăрать.
Кам утнă унпа, хăйне курнă –
Вăл мĕн месерле выртать!

* * *

Вĕлтĕртетрĕ вĕрене вăрри.
Тахçанах вĕçтермелле чухне
Ларса юлчĕ вĕрене çинче –
Тĕлĕнтерчĕ хăйĕн вăйĕпе...
Майĕпен, пĕрех, вăл ӳкрĕ мар-и?
Сив хĕлсем пуль пулчĕç вăйлăрах!
Вĕрене вăрри вĕçет юр майлăрах...

* * *

Урам урлах ман тусăм
Пĕчченçĕн пурăнать.
Тепĕр чухне пуль шухăш
Çав хĕр патнех пырать.
Каçсам, тет, пуль çав хĕр те,
Каçсам эс ман патне.
Санпа пĕрле пуласшăн
Çунать пуль ман чĕре...
Пăхать çав хĕр çĕр-кунĕн,
Кĕтет хăй телейне.
Кам ун патне халь килĕ,
Тупать пуль шăпине.
Урам урлах ман тусăм
Пĕчченçĕн пурăнать.
Юнашарти чăн тусĕ
Пĕр ун çинчен шутлать.

* * *

Ташлаттарать çав пурнăç çулĕ,
Тепĕр чухне такăнтарать...
Мĕн утнă çулĕ пурпĕр юлĕ –
Утса пыни савăнтарать.
Мĕн чухлĕ пулĕ пулчĕ шырлăк,
Мĕн чухлĕ пулчĕ хур курни.
Пĕрех çул парнелет пек ырлăх,
Пĕрех пур пулĕ çул Турри.

Чӑнах та, эпӗ ӳркенмерӗм
Чӑн пил ыйтма ҫул Турринчен.
Пӗрех, каллех эпӗ пӗлмерӗм
Чӑнни ӑҫта, мӗн пулнине...
Кайрӑн кӑна пуль кӑшт чухларӑм –
Ман утмаллаччӗ тӳр ҫулпа!
Эпӗ вара каллех суйларӑм,
Эп утрӑм вӑрттӑн ҫулпала.
Унта, шутларӑм, ним те ҫуккӑ –
Мана вӗт ним те кирлӗ мар!
Анчах та куртӑм эп тем чухлӗ
Ҫак ҫул ҫинче асап та шар!
Халь тин шутлатӑп, эх, шутлатӑп:
Ташлаттарать пурнӑҫ тени!
Тепӗр тесен, мӗн чуль утатӑн,
Ҫавӑн чухлех тупатӑн вӗт...

* * *

Тӗттӗмрен, тӗттӗмрен илсе тухрӗҫ
ҫулсем.
Тӗттӗмех илсе кайӗҫ вӗсем...
Пӗр кана ялтӑраҫҫӗ пек янкӑр
кунсем,
Ялтӑрайрӗҫ те пӗтрӗҫ чунсем...

* * *

Темскер, таса мар эпӗр халь:
Суятпӑр темскер, калатпӑр.
Пӗрех, мӗн тӑвас тенине
Ытла тӑрӑшсан та тумастпӑр.
Кӑштах тасарах пулсанах –
Тӑвас тени килӗ хӑех!
Тен, кӑшт ырӑрах пулмалла,
Ун чух, тен, туятӑн вӑйна?

Пулсан та пуласчĕ Тур пек,
Сăмах калама вĕренесчĕ!
Чăнни, каласан, пулатех,
Тепре çĕкленет ку тĕнче те!
Ак, халь вара мĕн-ха куратпăр –
Тĕнче ишĕлет майĕпен.
Сăмах калама та тăхтатпăр –
Суятпăр, суятпăр, суятпăр...

* * *

Тĕтреленчĕ тĕнче, тĕтреленчĕ...
Утма çул та кăшт çеç курăнать.
Пĕр ача питĕ хыт тинкеретчĕ –
Курăнать, хăй çулне шырать!

Унăн çулĕ килет тĕтре витĕр.
Те тупать ĕнтĕ вăл, те тупмасть.
Кăштахран тĕтрене çилĕ сирчĕ –
Тĕтре витĕр темскер курăнать!

Аякра пек таçта, вĕç-хĕррисĕр
Питĕ чаплă тĕнче курăнать.
Ун патне пĕр ача хĕрхенӳсĕр
Кун та çĕр ун патне туртăнать.

Эх, мăнтарăн, утса çитейместĕн.
Пит тĕтреллĕ-çке ку тĕнче.
Утса тухăн-ши, эпĕ пĕлместĕп.
Тем вĕçет-ха, вĕçет çил çинче!

* * *

Эп пурнатăп таçта. Эп пĕлместĕп.
Кунпа çĕр хушшинче, тен, пурнап?
Пĕр тухатăп та пĕр кĕретĕп...
Алăкне-ши вара кам уçать?

Çĕрпе кун хушшинче темĕн пур пек.
Тем шыратăп эп çавă тĕлте.
Кун килсен эп кăштах çуралап пек.
Каç çитсен, тен, вилетĕп татах...
Çавăн чух пулĕ эп çĕнелетĕп,
Улшăнатăп эп çавăн чухне...
Ир тăрсан эс мана паллаймастăн –
Каç выртсан, эпĕ хам та виле!
Тăр-ха, тăр, акă, кун та килет вĕт!
Çиттĕр мар-и выртса вилнĕ пек.
Хĕвел тухрĕ те эсĕ ача пек,
Тин çуралнă пек, çухăр татах.
Чупса тух урама. Сывлăш урăх.
Ку тĕнче те, иккен, аван!
Ир çинче çуралать манăн сăввăм.
Сăввăмра пурăнать çав ача!

* * *

Ирĕлет шур юр паян.
Шăранать пĕр юрă.
Эс ăна каласанах,
Ху та пултăн юрлă.
Шурă юр çăвать, çăвать...
Çунăçем, вăл ирĕлчĕ.
Ман чунра та шăранать
Çак пĕчĕк икерчĕ...
Çисе пăх-ха, тутансам,
Юртан тунă чухнехи
Алăра сан çăкăр...
Вăл чун çăкăрĕ тесен,
Тĕрĕс пулĕ маншăн.
Эп пĕлетĕп, юр çăвать

Ман чунра кӑна пуль?

* * *

Эп тахҫанах ҫырманччӗ...
Сӑвӑ, тесе, утман.
Ак, хальхинче тем тухрӗ,
Тухрӗ, тен, утӑмран?
Шӑп утнӑҫем, тем тӗрлӗ
Сӑмах – пуҫтарӑнать.
Мӗнле эс ҫырса ӗлкерӗн,
Вӗт, сӑвӑ ҫухалать!
Пӗрех, утсан та, акӑ,
Сӑмах та – ялкӑшать.
Ҫак утӑмран чӑн сӑвӑ,
Таҫта та курӑнать.

* * *

Пӗлместпӗр эпӗр нимӗн те –
Пӗлсен те эп – манап.
Ун пек пулсан пит лайӑхччӗ –
Кун пек те пурӑнап!
Ача чухне пӗлеттӗм
Мӗнпур ҫак тӗнчене.
Халӗ тесен, пӗлместӗп,
Пӗлместӗп – нимӗн те!
Халь тин вара аван пек –
Тата авантарах!
Эп нимӗн те пӗлместӗп –
Пӗлсен те эп – манап!

* * *

Пурччӗ-ха аякра-аякра пӗр
тӗлленчӗк.
Темӗнле ирӗлсе палӑрать.
Ун патне ан пырсамччӗ...

кӳлленчĕк
Чарса тăчĕ мана хăратса...
Ах, тем чухлĕ çав шыв пухăнсаччĕ.
Пырса кĕр те эс пут çавăнта!..
Çав шывра курăнатчĕ тĕлленчĕк...
Тен, тен, эс те унта пулса?
Çав шывра тĕкĕрти пек курнатчĕ
Сан сăну, кĕлеткӳ те кăкру...
Эп ăна ĕнтĕ тек тытаймастăп.
Эс тĕлленчĕк вĕт ман. Эс шывра!
Шыврисем те аван-ха, пĕлетĕп.
Эпĕ хам та шыври. Мĕн амак?
Эпĕ халь хам чуна ăсталатăп.
Çав кӳлленчĕк пекех тĕлленеп!
Пурччĕ-ха аякра ман тĕрленчĕк,
Пурччĕ манăн пĕр чун тĕкĕрте...
Ах, çавна та пулин курсассăн,
Тем пулать пуль ман – чĕрере?

* * *

Çитет, çитет ман вăхăт.
Çитет вилĕм тени.
Ун чух мĕнле вилес-ха,
Кăшт пурăннă чухне.
Ун чух эп, тен, пулатăп
Пĕр çамрăк çеç ача.
Вилес чухне чупатăп
Эп кăшкăрса вара.
Тĕнче тепре хут пултăр
Пĕр пĕчĕк çеç ача.
Ун чух вилеп тени те
Çукрах пулать чунра.

* * *

Юр выртрĕ, выртрĕ, выртрĕ...
Хĕл ларчĕ-ши вара?
Тен, çавăнпа ман чун та
Вăранчĕ пулмалла...
Халь эпĕ те шур хĕл пек
Выртса, выртса пăхап.
Ман çийĕн, тен, мулкач та
Сиксе, сиксе иртет.
Ах, савăнать ман чунăм –
Вĕт ман çинче çав юр!
Эс юр пекех пулсан та,
Эс ху та хĕл вара!

* * *

Улмуççисем юр айĕнче... Юр хупăрларĕ
Çĕркаç килсе çĕре хуллен-хуллен.
Такам шурпа сăрланă пек тăраççĕ
Халь тин, тин пĕчĕк пек çуртсем...
Юр канлĕн лăпланса выртма шутларĕ.
Пĕр çил те çук. Çук юр пĕрчи те...
Кăсăясем сиккелеме пуçларĕç...
Таçтан инçетлĕхрен килет шур пĕлĕт пек,
Çапах та ку ниме те хăратмарĕ.
Юр выртрĕ çаплипех. Эп те утса пыратăп.
Ку пурнăçра ман чунăм юр пек выртттăр –
Вăл выртрĕ юр пекех çак çĕр çине...

* * *

Ку тĕтреллĕ тĕнчере
Ним те çукка пулĕ.
Çуртсем халĕ пĕлĕтре
Куранаççĕ çӳллĕн.
Те вĕçет ку, те ӳкет –
Нимĕн те пĕлмерĕм.
Шура-шура тĕтрере
Хам та эпĕ пĕтрĕм.

* * *

Хĕрачасем таçтан тем сăнлă –
Пĕрре пăхсах văл куранать!
Вĕсем çине, тен, çăлтăр çунă –
Ĕмĕртенпех çав ялтăрать...
Тен, ашшĕ пăхнă питĕ сумлăн,
Халь тин чун ăсĕ уçăлать.
Тен, амĕш те чунне пуль хушнă
Чĕвĕлтетсе чĕкеç пекех...
Анчах кайран мĕскер-ши çырнă –
Тура çырни, тен, куранать?
Вĕсем, тен, арçынпа та пулнă –
Сăмси çинче çав палăрать.
Сăмси çеç мар, ун куçĕ урăх –
Ун куçĕнче шуйттан ларать!
Văл-ку хĕрарăм хуçине те
Никам та паллаймасть, тет, халь.
Văл вăрттăн тĕкĕр пек курнать те
Çак тĕнчене йăлт тĕкĕрлет.
Эпир пăхатпăр та куратпăр...
Ку хĕр те мар, шуйттан кăна!
Ун сăнĕнче çав палăрать!
Хĕрачасем таçтан тем сăнлă –
Таçтан Тур сăнĕ палăрать..

* * *

Янӑрать вӑрман... Шоссе хӗрринче
Кунӗн-ҫӗрӗн машина сасси.
Янӑрать вӑрман. Килет темӗскер,
Вӑрмантан тухать тем вӑрҫни.
Шӑлтӑр-шӑлтӑр та тем шалтни,
Чӑн та, тем урӑхла илтӗнет.
Машин мар ку, Ҫук. Вӑрман сасси
мар.
Ку сасса уйӑрма май та ҫук!
Тем, темскер пурӑнать пуль кунта
Пӗр ҫӗр саслӑ, пин тӗслӗ чӗрчун?
Макӑрать те вӑрҫать, тем калать,
Машина-и ятлать, тен, ыйтать?
Итлесен-итлесен, ку вӑрман
темӗскер
Пӗр хӑй майлӑ чӗрчун пек
курнать.
Эс тӑнла, эс тӑнла вӑрмана,
Вара пӗлӗн ху кам пулнине...

* * *

Тӗлӗнмелле ҫанталӑксем
Пуҫа ҫапса ҫураҫҫӗ.
Пӗр тӗлӗклӗ, пӗр пӗлӗтлӗ
Вӗт ҫумӑрсем ҫӑваҫҫӗ.
Утма та ҫук, кулма та ҫук –
Шӑла ҫеҫ хытӑ ҫыртӑр!
Урам урлӑ каҫма тӑрсан,
Йӑлт пылчӑклӑ пулатӑр.
Пӗрех, пӑхан та тепӗр чух,
Инҫет ытла тӗтреллӗ.
Ҫав инҫетре темскер пурах,
Ытла та илӗртӳллӗ.

Вара чаран хăвна кăштах.
Пулин, ку пултăр пылчăк!
Ак, пăх-ха, çав инçетлĕхре
Таçта вĕт эс те пур пек.
Эп çавăнта, çитес пекех
Пылчăк çăратăп халĕ.
Халь ман çине, кĕтнĕ пекех
Пĕр тĕлĕклĕ, пĕр пĕлĕтлĕ
Вĕт çумăрсем çăваççĕ...

* * *

Ах, пурнăç тенине пĕлесчĕ –
Пурăнни çеç çителĕксĕр!
Пĕрре те хăть пулин вилесчĕ...
Вара, тен, пĕлĕн, ку мĕскер.
Мĕскер ку пурнăç пĕрмаях
Сана ватса тăрать.
Тин çеç, аван пек тенĕ чух
Сана каллех такăнтарать.
Ах, пурнăç, пурнăç сан ăсу
Тумхахлă çул пек курăнать.
Тепĕр чухне çу пек чĕрӳ
Каçса кайса çухăрттарать...
Ак, вилчĕ манăн тусăм та –
Епле вăл питĕ чĕрĕччĕ!
Мана курсан, кирек кампа та
Пĕрмай хыт калаçатчĕ.
Халь çуккă акă нимĕн те.
Пĕр тĕмеске çеç юлчĕ.
Çав тĕмескен чечекĕ пек
Хĕрес тени çеç ларчĕ.
Ах, пурнăç тенине пĕлесчĕ,
Çав тĕмеске – пуласчĕ.

* * *

Çук, урӑх нимӗн те туйман –
Пурӑннӑшӑн эп савӑннӑ.
Хӑвна тытса пӑхкаласан,
Хӑвнах пырса эс тӑрӑннӑ.
Эс ху пулсассӑн, мӗн вара,
Вара тӗнче те пур пек.
Тен, çавӑнпа ху пуррипе
Ку таранччен эс пурӑннӑ.
Тепӗр чухне куç хӳрипе
Çын кайнине куратӑн та
Тем пулнӑ пек туятӑн.
Пӗрех, тепре çех çӗкленен...
Апла, татах пурнатӑн-ха!
Эп пур-ха тенӗ пек татах
Тыткаласа пӑхатӑн.
Мӗнле калас, чӑваш тени
Тыткаласа пӑхасшӑн.
Çавӑн чухне, тепӗр чухне
Хӑвна эп чӗрӗ, терӗн-ши?

* * *

Хальхи вӑхӑтри çынпа
Нимле калаçма май çук.
Калатӑн ӑна: ку çапла.
Илтетӗн: çук, урӑхла ку!
Кирек мӗн çинчен калаç.
Кашнин хӑйӗн ӑсӗ пур.
Таçтан килсе кӗнӗ ӑнлав
Халь тин пуç пулса тӑрать.
Кире мӗн кала, ӳкӗтле,
Пӗрех хӑйӗннех перет.
Ун пур хӑйӗн шухӑш,
Ун пур халь ӑнлав.
Ӑна – улӑштармасть.

* * *

Сăвă çырас терĕр-и?
Сăвă çырма кирлĕ мар.
Сăвва, çырсанах, тӳрех
Çак чунсăр тĕнче вăранать.
Вара вăл сана та тивет!
Пăхаççĕ ун чух йывăççем
Темле урăхла куçпа.
Çул хĕрринчи тем чухлĕ чечек
Темле куççулленнĕ пек...
Чул та, чул терĕм, унра
Чул чунĕ вут пек упранать!
Хĕвелĕ те уншăн сана
Усаллăн тем пек пăхать...
Йăлтах вĕт, йăлтах чунланать!
Вара эс мĕн тăвăн, тет?
Тĕнче халь вăраннă,
Тĕнче халь хăват,
Вăл Турăран та ирттерĕ!..
Ăт, сана, сăвă, тет!
Халь тин вăл сана пĕтерет.
Тен, çавăнпа кирлĕ мар.
Эс сăвă çырсан, пĕлсех тăр –
Мĕн чухлĕ тĕнче килет...

* * *

Кӳренни вăл тем мар.
Кӳренни те иртет.
Пĕр-икĕ йĕрке çырса хур –
Урăх чĕре пулчĕ те!
Мĕнпе те пулин кӳренсен,
Эс урăх тĕнче ту.
Çав тĕнчере хурлăх çук.
Унта сăвă çех пур.

Кирек мĕн килсе тухсан та
Эс çавăнтах сăвă çыр.
Вара эс ху та урăх.
Санра япăххи çук!
Ак, çыртăм, чăнах та, çыртăм.
Иртет вĕт мĕн хурланни.
Мĕн çырнă, унта кĕвĕç çук.
Мĕн çырнă – унта çураçу.
Иртет вĕт, çураçрăмăр пек.
Шалти те, тулти те пĕр тан.
Халь тин кӳренӳ çук.
Пĕр сăвă тесен – пур!

* * *

Вĕлтĕртетет кĕрхи çанталăк,
Вĕçĕ-хĕррийĕ çук.
Вĕлтĕртетсен, вĕлтĕртетсен те
Хăвна эс пурпĕр туп!
Çухалнăччĕ тахçан вĕт эсĕ
Тасти темле çынра.
Халь ху та пул-ха çав çын евĕр,
Вĕлтĕртетех тата.
Вĕлтĕртетет кĕрхи çанталăк,
Вĕçĕ-хĕррийĕ çук.
Хама шырарăм пĕр-ик талăк –
Çуталчĕ те – тупатăп вĕт!

* * *

Çил çинче те тăма çăмăл мар.
Çил çинче те çырма вăйна пар!
Сивĕ çил ман алла шăнтать,
Хут листи те çӳле хăпарать.
Пурпĕрех пĕр-ик хут листи
Эп çыратăп çак çил çинчен...
Ма тесен, пур ман чун хистени,

Пур-ха, пур ман çинчен калани!
Сивĕ çил тем каларĕ, тăнла,
Шăнса кайрĕ вĕт алă та сан...
Ручкăна тытаймастăн, ачам.
Сив çиле парăнатăн пулать!
Эпĕ халь шăнса кайрăм йăлтах.
Кирлĕ мар мана сăвă тени!
Ах, анчах мĕнле лайăх татах
Çил çинче тăрса сăвă çырни...

* * *

Иккĕнтен татаççĕ шур çырла.
Çутăлса çитмен те, кăшт курнать.
Тĕмĕ çумĕнчи ик кĕлетке
Калаçаççĕ темĕн, кăшт кулаççĕ,
Татнинчен те ытларах çырла
тăкаççĕ,
Шурă çырласем шур тĕм айне...
Эпĕ юнашар та йăлт куратăп,
Çын тени кăшт вăтанать,
шутлатăп.
Хам та эпĕ, аван мар пек, темшĕн
Çын çине пăхма та тăрăшмастăп
пĕртте.
Чăн та, мĕн тесе ку çырлана
татаççĕ?
Шухăшăм тухмасть пуçран пĕрех.
Ак, тата пĕри туртса ярать-им,
Пирусне тивертрĕ пĕлĕт евĕр.
Çырлисем те ӳкрĕç... Ӳкрĕç ку
хĕрсем
Шур çырлаллă шурă тĕм айне.
Мĕн туса выртаççĕ пулĕ халĕ
Ик çырла, пирус тĕп майлă...
Калама та тин пĕлместĕп тек.

Эп çырап, мĕн курнă, çав ӳкерчĕк
Куç умне тухать шур тĕм пекех.

* * *

Эп утса çӳретĕп ĕлĕкхи çĕртех.
Эп машина пулĕ, вăхăт çӳревçи.
Ĕлĕкхи пек эпĕ халĕ те айван –
Çавăнпа та пулĕ пит аван!
Акă, эп пăхатăп... Пăх-ха, çав
çуртах,
Чӳречи те çавă. Эпĕ те кунтах!
Эх, вĕт вăхăт иртрĕ. Эпĕ вăхăт
мар.
Эп кунтах çӳретĕп. Эпĕ урăх мар...
Эх, тытса пăхасчĕ çавă вăхăта,
Мĕншĕн-ха тарать вăл пĕчĕк
ачалла...
Чунĕ те кунтах вĕт, ман ăшрах
ларать,
Ăна упраканĕ, çуртăм та курнать.
Эп утса пыратăп. Авалхи урам.
Кам кăна пулман пуль, кам-ши
халь утман?
Кур-ха, кур-ха эсĕ ачалла чупать,
Ачалăх чупать те аташса юлать.
Юл-ха, апла, эсĕ. Юл-ха авалхи!
Тепĕр чух килсен, ак, курăн тепĕр
хут!
Ман чуна упратни, пур-им эп
кунта?
Ĕмĕрлĕх упрантăр умри ват йăмра.

* * *

Никам та килмерĕ вĕт, пăх-ха –
Чĕнсеччĕ сире килме!

Эпир хатĕрленĕ ăс-тăнлă
Çынна кăтартма кĕнеке...
Анчах эс тăхта-ха, тек çуккă
Вулас текенсен йышĕнчен...
Пĕр çын та, пĕр çын та çуккă –
Калас текенсем килеймен...
Чăнах та, малтан эп аптрарăм.
Мĕн-ма-ха килмеççĕ çынсем?
Вĕсем каласан та чĕнмеççĕ,
Вĕсем вĕт чĕнсен те килмеççĕ...
Апла, эпĕр пĕтрĕмĕр тин!
Çук, çук, ун пекех кирлĕ мар
пуль?
Ытла та эс хытă шутлан.
Чăваш вăл пĕлсен те пĕлмен пек,
Чăваш эс чĕнсен те чĕнмест.
Вăл Турă, ăна кам пĕлет?

* * *

Канлĕн кăна утса тухрĕ
Пĕр хĕрача вăрмантан.
Пичĕ ун уйăх пек шурĕ,
Тухрĕ утти сăввăмран.

Пăхрăм та эпĕ кулянтăм.
Мĕншĕн эп мар юнашар?
Эп тахçанах кураттăм
Хама та çын пек япшар!

Ун çумĕнче çын та çукчĕ –
Пурччĕ пек утрĕ пĕр шав.
Ун куçĕсем теме курчĕç,
Тухрĕ пуль, тем, пĕр пушар...

Акă, эп вĕлт пырса тăтăм –

Ман хĕрача юнашар!
«Ăçта хĕрупраç каятăн,
Куртăн-им эсĕ шар?»

Нимĕн те хĕр ман чĕнмерĕ.
Куçĕ çеç çунчĕ шартса.
Канлĕн кăна утса иртрĕ,
Хăварчĕ чуна шуратса...

* * *

Хурăн шутлать, темскерлĕ...
Епле, ак, вăтанать!
Пит стайлă-çке ку хурăн
Эс юнашар чухне.
Шутларĕ пулех хĕр евĕр,
Пырса та пăхсам, чăнах!
Ак, çулçă ӳкрĕ тепĕр –
Каларĕ пулĕ татах.
Эс юнашар çеç тăтăн
Çак шурă хурăнпа.
Шур шухăшна эп куртăм,
Санпа кăшт калаçса.

* * *

Чĕлтĕртетет тумламăн
Черчен турат лăсси.
Эс нихăçан шутламăн,
Ăçта-ши ун усси?
Усси çукрах та пулĕ.
Анчах илемлĕх пур.
Ман куçăмра вăл юлчĕ,
Апла, пулмасть хĕн-хур.
Пĕрчĕк пекрех пĕр çутă
Пуçтарăнать вĕçне.
Акă, вĕçсе вăл курчĕ

Пĕр сассăр çĕр çине.
Халь тин турат çĕкленчĕ,
Çеçкенсĕр – симĕсрех!
Ан тив – тĕнче чечекĕ
Тумламсăр – хитререх!

* * *

Йĕпе-сапаллă пурнăçра
Чун, тем, шăварăнать.
Ĕнер кăна эп асапра –
Паян, ак, савăнап...
Чун канлĕ, темĕн, пулчĕ,
Тĕнче те калаçать.
Тĕнче ытла тĕтреллĕ,
Темскер, пит шăп тăрать.
Чакăлтатать чакакĕ,
Машин çумран иртет.
Йĕпе-сапаллă çĕр çинче
Ман ĕмĕрĕм çитет.
Çитет пит лăпкă, савнăччĕ
Тахçан çак тĕнчене.
Анчах та кăмăл авăнчĕ
Чĕтретрĕ чĕрене.
Йĕпе-сапа шăп анчĕ
Çак сивĕ тӳперен...
Çапах та парăнмарăм эп
Çакна сар çулçă пек.

* * *

Кĕрхи кунсем килсе çитсен,
Шутларăм хам шăпам çинчен.
Эс мĕн, пĕлместн-им, ку ирччен
Эп шутламан хамăн çинчен.
Паян, ак, ӳкрĕ шур тĕтре
Ман хулпуççим çине.

Çак шур тĕтре тумламĕпе
Тепре çăвнасчĕ тетĕп те!
Вара, кайма та пулĕ, тен,
Çак çутă тĕнчерен.
Çăвах, апла, çак çĕр çине
Ху тумламна тĕтре!
Вара, тен, юхăпăр пĕрле
Тĕтреллĕ ир пекрех.
Мана кайма ку тĕнчерен
Халь тин, тен, иртерех?

* * *

Кăларасшăн кăчкă кашни кун
Кашни йывăç кĕр енне.
Пырса пăх-ха, калăн, юм
Пуçланать çĕр çумĕнче.
Ăшăтса пăрахрĕ. Халĕ тин,
Чăн та, пуçланать пуль çурхи туй.
Шĕшкĕ авăнать, шерепеллĕ пит.
Ăвăс та кăларчĕ кăчкă, кур!
Ку мĕне пĕлтернине пĕлетпĕр.
Çут çанталăк хăй çапла. Ăш çил
Пырса перĕнтĕр кăна. Çĕр
çумĕнчен
Чечексем тухса пăхаççĕ. Тем тума?
Мĕн тума, тет, ăшăтать çанталăк?
Улшăнасшăн пулĕ йывăççем...
Тен, вăрман та урăхла курнасшăн?
Пĕр сисмесĕр улăштарчĕ ман чуна.
Халĕ ман та йывăç пек тепре
Кăчкă кăларасчĕ кĕркунне.

* * *

Хĕл лармарĕ халĕ те –
Ăшăтса пăрахрĕ.

Чун кӗтсеччӗ сив хӗле.
Хӗл тени – килмерӗ.
Пурпӗрех пур темӗскер.
Хӗл тени пурах пуль?
Пӗлтӗрхи аса килет,
Чуна ҫӑмӑлрах пек.
Кил-ха, кил эс, сивӗ хӗл,
Сансӑр питӗ тунсӑх.
Ак, утса пыратӑп эп
Хӗл шыранӑ евӗр.

* * *

Хура кӗр ҫинчен кам ҫырнӑ
Турӑсӑр пуҫне.
Турӑ пур та, вӑл каланӑ,
Ку, хура, тесе.
Чӑн та, ӳкрӗ сарӑ ҫулҫӑ
Хура ҫӗр ҫине.
Йывӑҫсем те халь ҫаралнӑ –
Хура пек темле.
Чӑн та, эпӗ те хуралнӑ –
Хуралать тӗнче!
Хура кӗр ҫинчен асамлӑн
Ҫырчӗ ман чӗре.

* * *

Ӑнланма та хӗн, мӗн-ма
Сӑвӑ ҫырмалла, тет?
Сӑвӑ ҫыртӑм, пурӑнма
Питӗрех аван вӗт.
Ҫавӑнпа кашни пыран
Аллинче пӗр ручка.
Пар-ха, пар, эп те ҫырам.
Эпӗ те ача халь.
Мӗн куратӑп, ҫавӑн пек

Йӑлт çырса хурап та...
Çавӑнпа çеç эп тӑрап
Хам та Турӑ евӗр...
Чӑн та, пулчӗ çӑмӑлрах.
Эп, ара, халь сӑвӑç!
Сӑвӑра пурнатӑп халь.
Тен, сӑвви манра тӗр?

* * *

Аякра-аякра, шухӑшлатӑп, пӗрмай.
Пӗр ача пурӑнать ман пекрех.
Ун патне кашни кун ӑнтӑлатӑп, тӑмсай,
Кӗрсе тухӑп-ха, тетӗп, çул май.
Ах, анчах манӑн тус халь кӗтсе илеймест
Хӑй тусне. Тепӗр чух аса илнӗ чухне
Вӑл та пуль тунсӑхлать, кил тесе.
Тен, ун пек те мар пуль.
Тен, манса вӑл мана.
Туслашни нумая вӑл пымасть.
Иртсе кайрӗ, ак, кун. Иртсе кайрӗ тепри,
Пурпӗрех кӗрсе тухӑп тени.
Аякра-аякра манӑн тус пурӑнать,
Ун сасси ман чунра янӑрать.
Çав чӗнет. Тем чӗнет. Мӗн тума вӑл чӗнет?
Чун тени хӑй çапла, вӑл пӗлет.

* * *

Кирек мӗнле шухӑшӑма,
Кирек мӗнле туйӑмсене те –
Çырма пӗлесчӗ тетӗп-çке!

Тен, çавăнпа çыратăп та
Пĕр тĕм çинчен, чечек пирки...
Эп вĕсемпе туслашнă та
Нихçан та пĕтмĕп – вĕсем пек
Эп кашнинчех вĕт çĕкленеп,
Хĕл тăршшипех ăшша кĕтеп...
Ак, ăшă килĕ те çерçи
Турат çине ларса та канĕ...
Эх, чĕриклетрĕ пĕринче!
Мана чăтма пит лайăх пулчĕ.
Тен, çавăнпа мана аван!
Вĕсемпеле шухăш тытса,
Пĕр пек пулса, пĕр пек çырса
Татах – эп пурăнатăп та!

* * *

Хура халăх тени питĕ вăйлă.
Эп хура, эпĕ питĕ хура!
Хĕр тени халь иртет питĕ стайлă.
Çавăнпа ас илетĕп Турра!
Пулнă, тет, пирĕн Турă Хор ятлă –
Хураран та хура япала!
Çавăнпа, тет, пур мар-и Коран та,
Çавăнпа та пур чул – Кааба.
Хорăн пулнă пуль, чăн та, арăм.
Эп, шутлатăп, вăл пулнă Кебе.
Кам та кам кĕпепе çуралнă,
Çавă, чăн та, телейлĕ пекрех...
Те телейлĕ, те урăх, кам пĕлтĕр?
Пĕр хура çеç, мĕн пулнă пирте.
Хура пулнă, пулатпăр, пултăр,
Ун чухне эпир, чăн та. хитре!
Халь тетни, темĕскер, шурă майлă.
Куçăхатпăр, курсан, шур майра!
Чăваш хĕрĕ вара питĕ стайлă,

Пуҫ ҫапать пуль вăл, чăн та,
Хора?
Хура халăх пулни питĕ вăйлă.
Эп хура, эпĕ питĕ хура!
Ҫавăнпа эпир пултăмăр стайлă,
Ҫавăнпа пуҫ ҫапатпăр Турра.

* * *

Никам та ҫуккă. Кирлĕ мар.
Тĕнче халь пуш-пушах!
Халь тĕнчене тепре сăвар –
Ĕне ҫилли пек пултăр!
Эпир ларатпăр. Иккĕн ҫех.
Ĕне тени таҫта, тет.
Сан кăкруна тытса пăхсан,
Эс ху та Турă пек вĕт.
Ĕне, ĕне ҫеҫ Турă пуль,
Вăл ҫеҫ пире халь тăрантать.
Юнашартах вĕрин сывлать.
Вăл тĕнчерен вĕри пуль?
Кун иртрĕ. Каҫĕ ирчченех.
Мĕн ирччченех сывлать пек.
Эс юнашар чухне тĕнче,
Тĕнче те чăн тăван пек.
Никам та ҫуккă. Кирлĕ мар.
Тĕнче халь пуш-пушах.
Эс юнашар манпа пулсан,
Тĕнче халь мĕн тума, тет.

* * *

Тепĕртакран, тепĕртакран
Мĕн пуҫланать пуль тетĕр?
Тепĕртакран пĕлсех эс тăр,
Кулса килет пĕр ахăр.

Эх, ахăрать. Хăй çеç кăна
Нимех те мар пек пулĕ.
Анчах та ахăрсамана
Нихçан пулмасть пĕчченçĕ.
Ун çумĕнче темле çынсем
Пĕрне пĕри çиеççĕ.
Çавăн пекех усал тени
Ахăр çынран-ши пулнă?
Вăл ахăрать, ытла айван!
Кам ташшине ташлать вăл?
Ахăр килет те шăхăрать,
Ахăр килсен, вилет вăл.
Анчах та ахăрсамана
Иртсе каять пуль тетпĕр.
Çитет пире халь тылласа –
Эпир вĕт хамăр тылă!
Тепĕртакран, тепĕртакран
Килет пуль-ха пĕр ырлăх.
Çав ырлăх вăл чăваш ятлах,
Ăна курсан, чĕрлетпĕр.
Эх, чĕрĕлнĕ тесе вара
Татах çын пек пулатпăр.

* * *

Пур ырă çынсем. Çук мар.
Пур, чăн та, умра хитрелĕх.
Ак, кур-ха, епле Турăлла
Иртет халĕ хĕр кĕтмелĕх.
Хĕр тени, чăн та, пур, пĕлетпĕр.
Çавăнта пурнăç пур пулмалла.
Эх, каясчĕ хĕр хыççăн вилмелĕх.
Куç курать, шăл витмест пулмалла.
Хĕр тесен, тен, вилме те эп хатĕр.
Питĕ ватă пулни пĕтерет.
Куçпала çав хĕре ăсатрăм,

Кĕтсе илĕп тепре тăванла.
Ыр тени çуккă мар, чăнах та.
Ах, анчах вăл пуçра. Урăх çук.
Эп шутларăм, аван хĕрупраç ку.
Чăваш хĕрĕ аван, çавăнпа...
Унăн куçĕ пăхать çăлтăр евĕр.
Чĕринче унăн пурнăç тапать.
Ун таппи пуль мана тыткăнларĕ,
Çавăнпа эпĕ Туррăн пăхап.
Ах, турах, хĕр тени хĕр пек
юлтăр.
Тĕнчере урăх ырă та пур!
Эп çапла шутлани хăй те ырă.
Ырă пултăр, апла, пурнăç та.

* * *

Йĕпе-сапа, сапа, сапа...
Сапать çӳлтен темскер.
Сапа тесен, «сабар» пуçра.
Шăварнă-ши, тахçан?
Чăваш çине сапаласа
Вăл пурăннă пулать
Икĕ çырма хушши.
Вăл халь те пур вĕт-ха!
Ершу та Тигр мар,
Ăна пĕлетпĕр пек.
Анчах та Атăлпа Шур Атăл
Хушши те пур вĕт-ха!
Унта халь эпĕр сапăр
Пурнатпăр халĕ те.
Сапа, сапа, сапа...
Тĕлĕнмелле сăмах.
Чăваш тени те «чу»,
Сăвар тени те «су»,
Пăлхар тени те «пăл»...

Кирек ăçтан пăхсан,
Кунта шыв пур тени.
Шыв пуçĕнче ларса
«Шăваш» тени тахçан...
Çын тĕрлĕрен пулса,
Каланă тĕрлĕрен.
Асра тытса çавна
Чăваш калать халь «чăшш».
Йĕпе-сапа, сапа, сапа...
Чăш, чăш, чăш, чăш, чăваш,
Чăваш çăвать çӳлтен!

* * *

Карталанчĕ шурă уйăх.
Улшăнать тĕнче.
Çуралать пуçра пĕр шухăш
Вăрман çумĕнче.
Мĕншĕн-ха турат шуралнă
Уйăх çутипе.
Уйăх пек эпир пуласшăн.
Уйăх пирĕн Тур!
Тепĕр чух, пăхсан, куратпăр.
Карталаннă, та!
Апла, халь пĕлетпĕр ĕнтĕ,
Кăштă улшăнать.
Çавăнпа та эпĕ халĕ
Уйăх пек кăна.

* * *

Уйăх та хĕвел, уйăх та хĕвел...
Ахаль мар пуль ку!
Ахальтен пулсан вара
Турă пулмĕ те...
Тахçанах кăна илтсе эп,
Авалхи чăваш.

Чӑн малтан ҫут хӗвеле те
Уйӑха итлет.
Урӑхла, тен, май та ҫуккӑ –
Пурнӑҫ пӗлӗтре!
Вӑл ӑнса килет, пӗлетпӗр,
Пуҫ ҫапсан кӑна.
Уйӑхӗ вӑл «То», тет, ятлӑ.
Хӗвел, тет, пӗр «Ра».
Тахҫанах ҫакна каланӑ
Пӗр чӑваш кӑна.
Чӑвашсем, тет, пулнӑ ӗлӗк
Турӑ ҫыннисем.
Ҫавӑнпа та тек пуҫ ҫапнӑ
Пӗр Турра, То-ра.

* * *

Юр ҫукалать. Тӑрать тӗтреллӗ.
Ҫул, утнӑҫемӗн, ҫухалать.
Хӑвна тытсан кӑштах йӗркеллӗ,
Мӗн шырани – йӑлт тупӑнать.
Тен, ҫавӑнпа ӑшра тӳлеклӗ –
Мӗн пуласси вӑл пулатех!
Мӗн авалтан эпир ҫӳревлӗ –
Ҫитес ҫӗре ҫитетпӗрех!
Ак, ал-ура та ӗнтӗ йӑшрӗ.
Юр ҫукалать. Ҫав йӑпатать.
Ҫавах, ҫавах эс юрӑн тусӗ –
Шур хӗл тени, ак, тупӑнать.
Ӑҫта пӑхатӑн, юр халь ҫурӗ.
Халь пурӑнатпӑр пуль кӑштах.
Ман чунӑм та юр евӗр юхрӗ
Ҫӗр ҫумӗнчен вӗҫсе татах.

* * *

Ахальтен çырса лармастпăр.
Эпир çыратпăр чун валли!
Тепĕр чухне ăша вăратнăн
Тĕнче тăрать пек – чун илли.
Чуна илет, чăнах та, çул ку.
Ăçта халь тин илсе каять?
Кăна пĕлет пĕртен пĕр Турă,
Çынни вара вилсе каять.
Вилсех питех каяс килмест-ха.
Вилсен те чĕрĕ пурпĕрех.
Пире сума суса çӳрет-ха
Ачи-пăчи те ĕмрипех.
Тен, çавăнпа та хăрамастпăр,
Çыратпăр хамăр çинченех.
Мĕн-ма вара теме çухатнăн
Ман çырмалла, тет, ют çинчен?
Апла, çырар-ха, хамăр халăх
Мĕнле утса тухни пирки.
Ун çулĕ вĕт, пĕлетпĕр, паллă –
Унта пурах тĕнче «хурри».
Çав «хурисем» пире шыраççĕ,
Эпир кунтах, теççĕ пулех.
Тен, çавăнпа та пытараççĕ
Эпир çӳренĕ çулсене?
Пĕрех эпир ăна тупатпăр.
Вĕт пирĕн юн тени пурах!
Çав юн пулать, çакна çыртарчĕ
Çак çырăва татах, татах...

* * *

Хĕрарăм чĕрисем хăватлă...
Хĕрарăм чĕрине шыра!
Ак, çук çĕртех тупса кăтартрĕ,
Пĕр чĕрене... Ытла шултра!

Мĕн чухлĕ пуль ăна таптанă,
Таптаннă пуль вăл ӳснĕ май...
Такам алли пырса хупланă,
Мĕнле вара, тапать, тесе...
Ун пек чĕре, чăнах та, çуккă.
Вăл хăйшĕн мар, вăл çыншăн çеç.
Ăна çапла тума-ши пулнă,
Е тунă вăл хăйне хăй çех?
Ниме пĕлмесĕр шухăшлатăп
Хĕрарăм чĕрисем çинчен.
Хĕрарăм мар вĕт, мĕн шутлатăн,
Ăна тупаймăн виличчен....
Пĕрех, пĕрех ман чунăм ыйтрĕ
Çав пĕр чĕре çинчен татах.
Çумма лартмасăр хухрĕ, хухрĕ..
Халь тин вăл çуккă пуль пачах!
Мана çав чĕрене парсамччĕ,
Пулсам-и эпĕ çав чĕре!
Вара ман чун та савăнатчĕ
Шултра чĕрелле çын пулса.

* * *

Кирлĕ мар мана пушмак.
Мĕн тума тасатрăн?
Е тĕл пулăп терĕн-и,
Пĕр хĕре сасартăк?
Вăл пăхса, тен, тăрĕ, чăн та,
Ман пушмак çине кăштах.
Вăл каламĕ, пушмак пуçĕ
Вараланнă тахçанах...
Çавăн пек-и, ват çын пуçĕ,
Шухăшлать кăшт айванла.
Кирек мĕн пулсан та, курăр,
Пушмак пуçĕ тап-таса.

* * *

Халь тин темĕн чухлĕ йыхрав ман.
Чĕнеççĕ туссем тĕл пулма.
Темле пĕр хăватлă хурав пек
Тухатăп-и эп курнăçма.
Аван-и, туссем, эп вилмен-ха,
Эп халь те пурнатăп пулать.
Кăштах тепĕр чух чирлесен те
Чупатăп-ха эпĕ вăртах.
Çитетĕп, çитетĕп, час çитĕп
Сире эп курма, туссем!
Çитет-и-ха, тетĕп, кун çулĕ
Утса та тухма çын умне.

* * *

Ас тăватни эсĕ,
Пĕчĕк çеç ача...
Эс ларса йĕрсеччĕ
Пульман вагонра.
Ун чухне аванччĕ
Вутă пушатма.
Ах, анчах пĕр вучĕ
Лекрĕ якашка.
Эп тытма тăратăп
Яка каскаран.
Анчах вăл яка-çке!
Вăл ўкет алран.
Тем пек аппалантăм
Эп çав каскапа.
Пĕртте тытаймарăм
Эпĕ çав пулла.
Пăр пекех вăл çутă,
Çутă пулă пек.
Вăл шўрсе выртатчĕ
Вагон тăршшипех.

Чăтаймарĕ чунăм
Лартăм ун çине.
Мĕнле-ха эс, пуллăм,
Пултăн ман тĕле?
Ларса йĕтĕм эпĕ
Çав каска çине...
Те каска ăнланчĕ,
Вăй кĕрет таçтан.
Каскана шутартăм
Шыв пулли пекрех.
Персе анчĕ вăл та
Çĕр çине çӳлтен.
Çапла çав, куççуль те
Вăй парать пире.

* * *

Çук, кирлĕ марччĕ, тусăм,
Хытă юратма.
Мĕн чухлĕ юратăн,
Пĕтен çаплипех.
Пĕрне пĕр аван вĕт,
Кăшт кăмăллама.
Ун чух, чăн та, вăйлăн
Чун кĕрет вара.
Эсĕ ху та вăйлă,
Ху та эс патвар.
Анчах юратсан та
Пĕтет вăй манра...
Ытла, мĕн, ан пăхччĕр,
Тесе хăш чухне
Эп хама пăсатăп,
Ютшăнĕç тесе...
Ун чухне эп вăйлă,
Хам та юратап!
Мĕн чухлĕ юратăн,

Ун чухлех пӗтен...

* * *

Юлашкинчен пӑхса тӑрантӑм
Ҫак виҫ хӗре чӑн кӑмӑлтан.
Епле вӗсем ҫиҫсе лараҫҫӗ
Хуп-хупӑ кӑкӑрӗ таран.
Вӗсен хитрелӗхӗ пит пысӑк,
Черченлӗхӗ – хура куҫра.
Чупса пырасчӗ те пӗр хушӑ!..
Пӗр Турӑ ҫеҫ тӑрать чарса.
Вӗсем ытла та пит сӑпайлӑ,
Ал-урисем ытла тӑп-тӑп.
Кӑштах куласчӗ те хастарлӑн,
Вара, тен, эп те пурӑнӑп...
Асса каять вара ман чунӑм,
Йӑлт ҫухалать вара хисеп.
Мӗн чухлӗ пуль сире куратӑп,
Ҫавӑн чухлех эсир хитре.
Ҫапла ҫав пултӑр ку хитрелӗх,
Чӑваш чиперлӗхӗ кунта!
Кӑвак хуппи пек ярса илтӗр
Ҫак тӗнчене йӑлтах вӑлтса...

* * *

Чӑнах та, чӑнах та, чӑнах та
Пӗтмен-ха чӑваш ҫӗр ҫинче.
Мӗн хускалать те хӑватлӑн,
Тӗнче кисренет тӗлӗнсе.
Нивушлӗ ку Турӑ хӑвачӗ,
Кӑштах палӑртать ӳт-пӗвне?
Ҫунтарчӗ сӑваплӑн пӗр сассӑр
Чӑвашӑн сӑпайлӑ сасси...
Санпа юнашар эп пулсассӑн,
Пулатӑп, чӑнах, апӑрша...

Вара эпĕ хам та пит вăйлă.
Кун чух эпĕ хам та патвар.
Епле-ха чупать пурнăç тăрăх
Йĕвенсĕр лаша пек чăваш.
Халь тин эс ăна тек чараймăн,
Вăл тупнă пулех хăй чунне.
Чăваш ку, тесе эс калаймăн,
Чăваш ку, чăваш – ку, чăнни!

* * *

Çывăхрах ман савнă тусăм,
Çывăхрах пек, ан шарла...
Тĕл пулсассăн куça-куçăн
Ху та эс пулан çырла.
Çырла пек ман савнă тусăм,
Халь ăна никам татман...
Эс пулсассăн çума-çумăн –
Çырлана пĕрех татан!
Темле шухăшлă тĕнче ку,
Темшĕн ӳстерет çырла?
Мĕншĕнне пĕлетĕн ху та –
Шарламастăн-çке анчах...
Çырласем пиçсе çитсессĕн,
Татаканĕ тупăнать.
Вăл вĕт хăй те таттарасшăн –
Çавăнпа çырла пиçет!

* * *

Питĕ сивĕ, сивĕ, сивĕ...
Калаçать пĕр хĕрача.
Сăмсине унне тăм тивнĕ –
Тăм тени хăй пĕр мулкач!
Чăн та, сивĕ паян пулчĕ.
Çын кăна мар, хĕл шăнать.

Çут çанталăк манран кулчĕ,
Вăл вĕт хăйшĕн тăрăшать.
Кăшт шăнтмасăр, тăм тивмесĕр
Тĕнчере ним те пулмасть.
Кăшт çеç шăнтăн, хитрелентĕн –
Мулкач пек кускаласа...

* * *

Тул çутăлать. Ёçе кайма та вăхăт.
Анчах та сивĕ халь тулта...
Вăя пухса пĕрех тухатăп
Çак сивĕ уçлăха туйма.
Такам пуль уçнă. Çивиттийĕ
Сирсе пăрахнă пек выртать.
Çĕр-аннене шăнтса пăрахнă.
Хăй Турă килнĕ. Ун питне
Кăшт шурăхтарнă пек курнать.
Чуп тунă тесенех, тен, лайăхрахчĕ.
Чуп тунă чух юлать палли.
Анчах та халĕ сивĕ йăлт пĕтернĕ.
Пĕр юрату палли те çук кунта!
Çапах, çапах та çĕр пĕтмен-ха
халĕ.
Хăйне упрать, туртать çивиттине...
Çĕршыв сывлать. Сывланăçем,
пурнать-ха.
Апла пулсан, халь эпĕ те пурнап.
Утатăп сывласа сив айĕн.
Эп парăнмастăп сив çиле!
Тем пек хĕртсе шăнтсан та ман
çĕршывăм
Ку уçлăха, çук, парăнмасть нихçан!

* * *

Урамра сивĕ хĕл ларнă чух
Иртнинче роза çурчĕ çеçке.
Çавăн чух лайăхрахчĕ пек-çке!
Тĕнчене хĕрлĕ сĕм кăштă çапрĕ...
Çуккă халĕ çав роза, курмарăм.
Йăлт çухалнă ку роза çути.
Пурпĕрех куç умне тухса тăчĕ
Роза çурнă çав кунăн çути...
Роза çурнă çав кун пит хитреччĕ,
Çавăнпа манăн чунăм çунать.
Çав çутта ман чĕре ас тăвать!
Тепĕр хут ăна халĕ вăл чĕртрĕ,
Тепĕр хут эп курап. Ку тĕнче
Роза пек хĕрелет. Çунчĕ тепĕр
Ман чĕре те çак роза пекрех.
Тĕнчене тепĕр хут эс курас-тăк
Роза пек çунса ил тепĕре!

* * *

Авалхи сăн, курап, килет.
Аваллăха ас илтерет.
Тӳп-тӳрĕ ун сăмси кăшт кукăр,
Сип-симĕс куçĕ те çиçет...
Авалхисем, авалхисем...
Мĕн-ма чуна саваççĕ?
Мĕн-ма тесен, çав юнрисем
Каллех вĕт кун кураççĕ.
Тен, çавăнпа тĕшмĕшленсе,
Пит савăнса пăхатăп.
Эс кур-ха, кур, епле аван
Авалхипе пулмашкăн.
Тахçан авал хăй савнипе
Чăваш асса пуль ларнă.
Халь тин вара курнăçнипе

Пётмест-ха хěр сипечě?
Эс пăх та кур, эс савăн çеç.
Пулсам, тен, ху та паттăр!
Авалхипе, авалхипе
Чуну сан пултăр сапăр.

* * *

Юр ўкмерě. Çук, ўкмест.
Тем пек хыт ыйтсан та.
Хăйěнне вăл халь пěлет –
Юрсăр вăл пуласшăн.
Çавăн пек çанталăк ман,
Айăп çуккă уншăн.
Пěр çума, ак, тытăнсан,
Хупласах хурать-ха...
Юр ўкмерě. Çук, ўкмест.
Çавăнпа пит япăх.
Мана халě пурăнма
Юрсăр та пит лайăх!

* * *

Пěр сивě хěл пěр машинран
Пăхса пыратăп кантăкран.
Пěр пěчěк кантăк пек тусан,
Ку тěнчене йăлтах куран.
Ак, паллă вырăн. Ку çěрте
Эп тахçанах пулманччě.
Кунта эп çамрăк чух ачан
Чупсаччě çар уран...
Халь тин кунта вěт ним те çук!
Йăлтах темле çуртсем
Шур катемпин те пит çăран
Ўссе те ларчěç тин....
Пăхса пыратăп... Мěн çырни...
Халь ăнланма та çук!

Пĕр çурт çине темле «Седан»,
Теприн çине темле пĕр «Ральф».
Йăлтах, йăлт урăхла сăмах,
Пĕри те пирĕн мар.
Халь тин мĕнле çак хулара
Хăвна камне пĕлен?
Тĕнче ютланнă. Час çынсем,
Сан пеккисем, çухалĕç.
Тен, эсĕ те тепĕр чухне
Темле пĕр «Ральф» пулатăн?
Анчах та çук-ха, тепĕр чух
Хама çын пек туятăп.
Эп «Седанри» те, «Ральф» та мар,
Эп чăн чăваш пулатăп.

* * *

Хитре, хитре теетпĕр те...
Хитри халь ним те çуккă.
Тахçан авал, тен, хитререх,
Тен, хитререх те пулнă?
Халь тин вара пĕр хĕсĕк çул,
Çав çулпала пыратпăр...
Халăх калать: пĕр кут, пĕр пуç –
Çапла эпир пурнатпăр.
Ун пек чухне чухлатăр, тен,
Йăлт пĕчченех пулатпăр?
Хитре тесе, хитре тесех
Тăр пĕчченех юлатпăр.
Хитре тени вăл çын пекех,
Санпа пĕрле вăл уттăр!
Ик çын пулсан вăл хитререх,
Халăх пулсан – хăватлă!

* * *

Ку хитре тĕнче çинчен

Пурпĕрех çыратăп.
Шăннă тĕрĕ ирличчен
Эп пăхса ларатăп...
Чăн та, пăх-ха, мĕн çинче
Тĕрĕ тĕрĕленнĕ?
Кантăк шăннă ир çинче,
Хĕвеле иленнĕ.
Пур хĕвелĕ, пур тĕрри.
Пур пек манăн чун та!
Тепĕр чух чуна кирли
Куç умнех тухать-ха...
Эх, савнатăп ача пек –
Эсĕ ху та чĕрĕ!
Чĕрĕп пек çӳретĕп эп
Шăннă кантăк витĕр...

* * *

Тĕттĕмленет çĕршыв картийĕ –
Çĕр тĕрлĕ заодсен труби
Хăйне темле курасшăн пулĕ
Татах çӳле çĕкленнĕçем...
Ак, тĕтреленчĕ инçетри,
Тĕтреленет хура вăрман та.
Мĕн-ма вара мана валли
Çак тĕнчере ĕмĕт юлман та.
Тахçан аванччĕ, пĕлĕтре
Кăвак кăна çиçсе тăратчĕ.
Халь мĕн вара, халь пĕлĕтре
Хура пĕр тĕтĕм явăнайрĕ...
Ку, питĕ тĕлĕнтермĕш пек.
Кăвак хыççăн тĕтре килет-и?
Апла пулсан, апла пулсан
Йăлт тĕтрелентĕр манăн чун та!

* * *

Ĕмĕтленме аванччĕ те –
Пырса тĕртесчĕ хыттăн!
Çак чăрăша, çак чăрăша,
Ытла вăл юрлă пек-çке!
Кăшт тĕксенех юр тăкăнать.
Сана йăлтах хуплать вăл.
Чăрăш тени юр ăшĕнче –
Ман чун вара – хăй чăрăш!

* * *

Хĕвел çапать ку тĕнчене...
Тен, çавăнпа хаваслăн
Пăхса ларатăп тĕлĕнсе,
Хĕвел ачи пек вăрттăн.
Хĕвел кĕрет çĕн пӳлĕме...
Епле çунать ман çуртăм!
Ун чухнехи чăн тĕлĕкле
Пăхса ларатăп çуттăн.
Эс кĕр, хĕвел, эс çап мана
Ху çуттупа çул урлă.
Çав çулпала мĕн ачаран
Утатăп эпĕ вирлĕ.

* * *

Эй, сив çапать çав кантăкран.
Сивви кĕресшĕн пулĕ?
Е тепĕр чух ăш вырăнтан
Ăшши тарасшăн тет-и?
Сивĕ çапать те, уçăрах.
Чĕре сывлать хаваслăн.
Сивĕ тени вăл вăйлăрах –
Пире хире чĕнсшĕн.
Тен, çавăнпа пĕтмен эпир.

Эпир вĕт сивĕре тăратпăр!
Сивĕ чухне эпир халь хир,
Сивĕ чухне – шутлатпăр.
Çав хир пекех эпир пулса
Тырпул пек çĕкленетпĕр.
Сивĕ тетр-и, сив пултăрах –
Ку сивĕре хир – чаплă!

* * *

Урăх ним те çуккă, çуккă...
Пуш-пушах тĕнче.
Куçăма ман курăнчĕ
Чисти кĕленче.
Вилнĕ пек тăрать çанталăк.
Пĕр сас илтĕнмест.
Йывăç та хăйне пĕр палăк,
Хăйне çеç пĕлет...
Çуккă, çуккă, ним те çуккă –
Çак тĕнче кăна.
Тĕнчери ку пушлăхра
Эп те çук вара!

* * *

Пулать пĕр вăхăт питĕ майлă,
Кун пуçланман-ха пĕлĕтре.
Ун чух утса пыма пит лайăх,
Кĕтетĕн кун пуçланасса...
Çĕр хĕрричен пуçланчĕ чаплăн
Кăваккăн çутă ялкăшма.
Халь тин пĕтет ку хура чатăр,
Халь тин пуçланчĕ кун тума...
Çавна эпир кĕтсеччĕ, Туррăм.
Тен, çавă пулчĕ çурални!
Çуралнă пек хама туятăп
Хĕвел тухсассăн ир енне.

Хĕвелпеле эпир каятпăр
Çуталнă çак тӳпе çине.

* * *

Утма çăмăл мар иккен...
Тин çунă юр тăрăх ирпе
Пыратăн эс вăрттăн, пĕччен
Каçхи шăплăха сирсе.
Шалт! çеç, ак, тăвать вăрманта.
Кам, тет, халь унта çӳрет?
Çук ним те, сан çумăнтан
Çил çеç вăшкăртса иртет.
Ӳкет майĕпен шурă юр.
Çути çул çине пухăнать.
Сĕм-тĕттĕм пулсан та, кур,
Юр пек, кун пулса килет.

* * *

Шкул патнелле çывхарнăçемĕн,
Кăшт хăвăртрах та утрăм пуль.
Çитсен, çитсен, ак, çитсенех,
Тӳртен те утрăм шур кĕрт урлă...
Эх, çак тĕлтеччĕ вĕт-ха, тетĕп,
Çуркуннепе серте шăтса...
Халь тин вара шап-шурă кĕрт те
Пĕр шартлама сив хĕл кăна.
Çапах та куртăм. Шур юр витĕр
Таçтан шалтан тем сăрхăнать.
Кăшт утрăм çеç-и, тапрĕ тухрĕ
Ман куç умне серте пĕр карт.
Сип-симĕс хăй юр айĕнче.
Шăтса тухмалăх ӳснĕ тейĕн.
Пăхсан-пăхсан куран унта
Йӳç паранки те, çеçпĕл те...
Эй, Тур, мĕнле вара кун пек!

Шур кĕрт çинех пуль кĕрсе ӳкрĕм.
Ку шартлама сив хĕл пĕлет.
Тем шартлатса пуль çурăлать?
Шартлатрĕ çав, эпĕ ас илтĕм
Çурхи çак вырăн илемне.
Тата, татах та ярса пусрăм,
Çитсе те ӳкрĕм шкул тĕлне.
Шкулта вара тепре пĕр селĕм.
Хĕрсем лараççĕ шакăрин.
Пăхатăп та, вĕсен сенкерĕ
Кăвак çути пек вăй кĕртет.
Лараççĕ шавласа пĕр харăс,
Сĕтпе юн хутăш, шап-шурах...
Тен, асамат кĕперĕ карчĕ,
Тен, çапрĕ харăс аслати?
Темле аван пек пулса кайрĕ,
Кунта чăн чечексен пуххи!
Ăçта пăхан, çеçке хуравĕ,
Ăçта итлен, ача сасси...
Мĕн-ма тесен, Çĕн çул юрри,
Çĕн çул çывхарчĕ хĕвел майăн.
Кун çаврăнать вĕт паянтан!
Тен, çавнпа хĕрсен пуххийĕ
Чечек пекех халь ашкăрать.
Эсир курман-и, хĕр ахравĕ
Хăй майлă пит хитре тăрать.
Апла, тавах, Çĕн çул саламĕ
Çапла пуль халĕ янăрать.

* * *

Эх, ачамккă, халăх сăнĕ
Пур çав сан чуну çинче.
Тăтăн эсĕ питĕ тăнлă,
Кăмăл пур пит-куççенче.
Аллинче – хĕрлĕ ялавĕ,

Кăкăрĕ медаль тулли...
Эх, ачамккă, маншăн эсĕ
Палăртсам тута кулли.
Пурнăç юхăмĕ хăй майлă
Илсе кайрĕ çав сана.
Майĕпен сăнран сан кайрĕ
Аçу панă чăн тăмха.
Халь тин эсĕ... Такам эсĕ?
Тен, пĕр-пĕр герой кăна!
Пăхса тăтăн. Тăтăн, кайрăн
Çакă çутă пурнăçран.
Халĕ тин эс ху та ĕмĕр,
Ĕмĕрсем тăршши тăран....
Эс тăратăн чăваш евĕр –
Эп сана вĕт палламан!

* * *

Хĕлле... Питĕ сивĕ çĕрте
Пĕр роза пĕччен ӳсет.
Ăна такам лартнă пĕр чӳлмеке,
Çавна çеç вăл халĕ пĕлет.
Кăштах хатĕрленнĕ пулас татах,
Çеçке те кăларнă. Тухасшăн татах.
Ку тĕшмĕш пекрех, çеçке те
çурать...
Шутлатăп пăхса чечеке.
Ку, чăнта, хăй тĕлĕнтермĕш!
Ăна лартаканĕ пуль хăй пĕр асам,
Алли унăн вăйлă çав тĕрлĕ.
Ак, халĕ, чăнах та, çеçке хĕмленет.
Хĕлле хĕрлĕ мăкăнь курса-и?
Çав мăкăнь пулас лартаканăн чĕри.
Çав çурчĕ хăйне куç туллийĕн...
Хĕлле... Питĕ сивĕ çĕрте
Пĕр роза пĕччен ӳсет...

Кам курнă ăна, пĕр çавă пĕлет –
Чечек сивĕ хĕл ӳстерет!

* * *

Кăлтăр-кăлтăр! питĕ лайăх
Ыткăнса пыма çапла.
Хам та пултăм эпĕ кăлтăрч,
Кусса кайрăм савăнса.
Ман та пурччĕ çумра савăк,
Савăк çеç пĕр хĕрача.
Аллинче ман ал выртатчĕ –
Чупса кайрăмăр çапла...
Ун чухне тĕнче вылятчĕ,
Вăл кулатчĕ пирĕн пек.
Тен, вăл курнă: питĕ савăк
Икĕ çамрăк ачана.
Çавăнпа пуль аса килчĕç
Икĕ çĕмрĕк кустăрма.
Кусса кайрĕç те килмерĕç,
Çук, килмерĕç çаврăнса.

* * *

Мĕн çинчен çырман-ха эпĕ,
Тен, каланă та нумай?
Пурпĕрех шур хут çине
Эп çырман мĕн пулнине.
Эп ун чух ача пек çеçчĕ,
Çĕн çул умĕн – кукăль пекчĕ.
Пĕçеретчĕ ман анне
Кăшманпа палан кукли...
Кăшманне кăштах сарать те
Ун çине хурать палан.
Чустапа йăлтах хуплать те –
Акă, пулчĕ те уяв!
Кăмака вĕри пулса çав,

Кукăль мар çеç илĕртет!
Кукăле алла илсессĕн,
Халь те пулĕ пĕçертет!
Пĕр пылак та çĕр хут йӳçĕ,
Çинĕçемĕн, туйăнать.
Халь ăçта-ши çавă кукăль –
Ун чух пулнăн туйăнать!

* * *

Хĕл пилĕкĕ ытла та авăк.
Эс тытса пăх ăна паян!
Ĕнер кăна вăл хытаратчĕ –
Паян вара – аван, аван...
Пите ĕнер хĕл пĕçертетчĕ,
Халь тин вара кăшт ачашлать.
Çулсем те халĕ сапăрланчĕç,
Утас тесен, утах, татах!..
Хĕл пилĕкĕ хĕр пилĕк тейĕн,
Ман ытамра авкаланать...

* * *

Ачашшăн, ачашшăн хĕл килчĕ.
Йăлтăрр! кулать шурă кĕрт.
Хĕл халь, тен, ытла та хăватлă?
Ăна ачашлаймăн питех!
Вăл хăй, ак, сана кăшт ыталĕ,
Ачашлĕ сана çурăмран.
Ак, чăн та, ачашĕ ун пур-тăр,
Пите пĕçертет вăл вăйлах.
Ура та, ак, кăштă шăнчĕ...
Пĕрех питĕ лайăх, ачаш...
Мана ачашлать хĕл сиввийĕ.
Хĕл килчĕ ман чуншăн ачаш!

* * *

Кил асамĕ ман чунра –
Час киле каятăп.
Эп килте кăна паян
Çĕн çула кĕтетĕп.
Эсĕ кил-ха, Çĕнĕ çул,
Шурă шăллă куллупа.
Ах, ăçта-ши ман картиш,
Унта пулнă пуль путиш?
Эс пĕлетн-и, Çĕнĕ çул,
Эпĕр çакă шур çурта
Пĕрле тунă мар-и-ха?
Акă, çитрĕм. Çитрĕм мар-и?
Тем ялтратрĕ ĕмĕтре.
Йăлтăртатрĕ карчăкăн
Кил пекех ăшă кулли.

* * *

Юлашки сăвва çыратăп
Эп ку кивĕ çул.
Эп хама халь те куратăп
Темле – кивĕ пек.
Çĕнĕ çул килет пит капăр.
Ун пеки тек çук.
Ун пеки тек урăх çуккă –
Эпĕ хам та хĕл!
Хĕл тени пире çĕклет-и,
Е тепре лăп! ӳкерет?
Манăн чунăм тĕрлĕ енлĕ
Сăвă хатĕрлет.
Сăвăланчĕ Çĕн çул умĕн
Çакă кив тĕнче.
Унпала пĕрле утатăп
Çĕнĕ çул патне.
Ним те мар халь хытă сивĕ,

Ним те мар кив çул.
Иртсе кайтăр та тин çиттĕр,
Çиттĕр – Çĕнĕ çул!

* * *

Чĕлхе çинчен тепре шутларăм,
Пĕтĕм ĕç-пуçăма сирсе, эп патăм
Хам сассăма – тĕнче илтмелĕх...
Пĕр сассăр тăнă чух, чăнах та,
Мана аванччĕ пурăнмашкăн...
Никам та ним те каламастчĕ,
Тĕнче те ним те шарламастчĕ...
Пĕр сассăр тăнă чух... Сасартăк
Хам сассăма эпĕ кăлартăм...
Тем пулчĕ пек – тăнларăм та –
Тĕнче чĕтревлĕн сиксе илчĕ.
Хăрарĕ пулинех, чăнах та,
Анчах та ман янрвлă сассăм
Ун чĕринчех пытаннă пулĕ?
Тĕнче пĕр ахрăм сас кăларчĕ...

* * *

Чĕрем пĕтменшĕн савăнатăп...
Кирек мĕне курсассăн та
Пĕр кайăк пек темле хавассăн
Сиксе илет çунат сарса...
Ак, темĕнле тĕнче хайлавĕ –
Ăна пĕлесшĕн вăл çунать.
Е тепĕр чух пăр пек тапранĕ –
Халăхпала та пĕр пулать...
Е пĕр хĕрарăм тĕл пулать те,
Чăнах та, Турă пек тапать.
Ун пек чухне вăл хăй те чаплă,
Арçын пекех паттăрланать...
Чĕре пурришĕн савăнатăп.

Чĕре пĕтместь-ха, пурăнсан.
Мĕн-ма тесен, тĕнче вăл хăй те
Ман чĕрепе пулать пĕр тан!

* * *

Шăплăх хуçаланать чунра...
Тĕнче шăпланнă чух, чăнах та,
Эп хам та шăп çӳретĕп пуль?
Калатчĕр, тетĕп, эп тем мар,
Чĕнмесĕр çӳресен те юрĕ....
Çынсем вара пĕр чарăнми
Çак тĕнчене сӳтсе яваççĕ...
Эп шăп тăрап. Калаçчĕрех!
Тĕнче, теп, тен, кăштах лăпланĕ?
Пĕр çын лăпланнă чух кăштах
Хăйне те вăл татах ăнланĕ...
Мĕн-ма тесен, сас кăларсан та,
Сăлтавсăр мар вĕт кăларатăн.
Кăларасса та кăларать,
Пĕр шăплăх çеç. Çав çуралать!

* * *

Тĕнче туталлă та çут куçлă,
Калаçнăçемĕн, сас парать.
Çавăн чухне тути ун тутлă,
Куçĕ ачан пек ялтăрать...
Ак, пĕринче ăна каларăм:
«Мĕнле эс çутă та таса!»
Тĕнче вара пĕр сас памарĕ –
Тути çеç кулчĕ кăштарах.
Эпĕ тата темскер тăваслăн
Калатăп тутлă сăмахсем...
Каланăçем, тĕнче тăванлăн
Ыталанçи тăвать çемçен...
Сисеп, вăл хăй те тем каласшăн,

Темскер тăвасшăн пуль манпа?..
Анчах тĕнчен тути-ши калнă,
Е çутă куçĕ суккăрланнă?
Çук, шарламасть, темле вĕрӳçĕн
Кăшт пăхкалать те йăл кулать.
Эпĕ вара вут пек хĕрӳçĕн
Татах, татах та калаçап...

* * *

Кĕрхи çулăм чуна ярса илчĕ,
Тĕпренех, пĕтиччен çунтарать!
Çуннăçем, ман телейĕм те çитрĕ.
Халĕ тин пурăнма та пулать!
Эй, çунтар, вĕрене, чун çунтармăш!
Çулăмна эс вĕçтер çил çинче.
Çуннăçем, курăнать питĕ тарăн
Пĕтсе çитнĕ тĕнче – тĕпĕнче.
Иксĕлми ялкăшать çавă çулăм –
Пĕтсе çитнĕн çунать ман чĕре!
Иртрĕ пуль пĕлĕтри кунăн-çулăм,
Халь вĕçетĕп те, ӳкĕп çĕре...
Çĕр çине те ӳксен, ним те мар
Таптасах кайĕç ман чĕрене...
Вĕрене пурпĕрех пурăнасшăн,
Тек тăкать çĕр çине çулçине...

* * *

Аякра, аякра... Çăлтăр касĕ чунра.
Çăлтăрсем айĕнче пĕтĕм пурнăç.
Талса анчĕç тесе, хăраса та тăрса,
Икĕ çын телейне, чăнах, тупрĕç.
Чăнласа та хăрушă, тĕнче сан
умра.
Вĕçсе кай кайăк пек çăлтăр çулĕн!
Çăлтăрсем куççӳль евĕр тулса...

Вĕсен çулĕ, çынсенĕн пуль çулĕ?
Такамсем тахçанах вĕçсе курнă...
Тахçанах çăлтăрсем чатăр карнă...
Иккĕнтен, виççĕнтен, тен, пиншерĕн
Вĕçсе кайнă та пĕтнĕ пулас...
Пĕрисем, ак, куратна, йăлтăр çех
Çĕр çине вĕçсе анчĕç пĕр харăс.
Тӳпере чăнласа Тур пурах...
Çĕр çинче вара пур юратуллăх!

* * *

Ылтăнлать тĕнчене кĕркунне.
Ыткăнать кунăм-çулăм.
Мĕн кĕтет-ши пире çул вĕçне,
Тупăнать-ши утма тепĕр утăм?
Кĕркунне пурпĕрех пĕлĕтлет,
Ӳккелет вĕтĕ çумăр.
Чун çакна тахçанах вĕт пĕлет,
Пурпĕрех кăшкăрать: «Пурăн!»
Пурăнма та пулать – ылтăнчи
Кĕркунне килнĕ майăн...
Пурăнма чăнласах та аван –
Кĕрхи кун пек килсе кайăн!

* * *

Шăл йĕрсе тăма аван –
Шăлсем пур чухне.
Катса ячĕçĕ пулсан,
Мĕн тăватăн, апăрша?
Пытарма тивет ăша,
Шăлланаç ун чух чунсем.
Чун кулать... Ытла çемçен
Вăтанать те тепĕр чух.
Паллă ĕнтĕ, çыннăн та
Шăл тени-çке пулмалла.

Шăлсăр мучи юрĕ-ха,
Шăлсăр каччă кирлĕ мар.
Ун кулма та пĕлмелле!
Кăшт çыртма вĕренмелле...
Шăлсем çуккă... Мĕн тăвас?
Хăвăртрах юсаттарас!
Тĕнче вара чăнласа
Хирĕç кулĕ савăнса.
Мĕн-ма тесен, шăллă эп,
Шăллă тĕнче йĕркелеп.
Шăл йĕрсе тăма аван –
Шăллă çын тени – йĕрет!

* * *

Çанталăк тăрать ырă,
Тăрать кĕркунне çиççе.
Вăрман çаралать вирлĕ,
Апла пулсан – ку та кирлĕ!
Ӳт-пĕвĕм те ман çанталăк,
Çӳç-пуçăм тăрать вирелле.
Кам калĕ сана: «Ку, кайăк!»,
Пăхса та тăрсан çӳлелле...
Эс, чăн та, çӳлте çӳретĕн,
Таçта аялта çынсем...
Çӳретĕн, çӳрен те ӳкетĕн,
Ӳкме те пулать, иккен...
Ун чух савăнса тăраççĕ
Кăштах аялта тăнисем.
Ытла эс вĕççе çӳресшĕн
Выртса пăх-ха эс çĕр çинче.
Выртса ан кулянăр тем чухлĕ,
Шуса та пăхсам хырăмпа...
Нумай унтанпа шыв юхрĕ...
Халь тин эп вĕçеп кайăкла.
Çанталăк паян питĕ ырă.

Сап-сарă, таса кĕркунне...
Вĕçетĕп çӳле, кам курнă,
Çав ӳкрĕ пулать çĕр çине!

* * *

Кĕркунне, шур юр ӳксессĕн,
Ăшăтать кăштах.
Чăн телей çунса килессĕн
Туйăнать татах...
Ун чухне аса эп илĕп
Иртнĕ кун-çула.
Тепĕр хут чупса эп килĕп
Çав çутта курма...
Çуттăн-уттăн вăл çутатĕ
Кĕрхи кунсене.
Ун чухне вăл, тен, кăтартĕ –
Çулсăр юлнине...

* * *

Хура кĕр килет – хуплать
Пĕтнĕ чунсене.
Кассăн-кассăн çумăр пур та
Чарăнать пек – чарăнмасть.
Мĕн чуль тӳснĕ хура-шур та
Тепĕр хут пуçтарăнать.
Çут çанталăк та чăтать, ав,
Эс те чăт, ан хуçăл, тет.
Тахçан пулнă çу та шав
Тепĕр хут пуçтарăнмасть.
Лăпкă халь, тен, сивĕрех те
Хутлансах ларать ман чун.
Йĕпхӳре те пур тем чухлĕ
Тăкăнса пĕтмен хĕн-хур.
Пурпĕрех, эй, çутăр мар-и,
Час шăнтать те пăрахать!

Ун чухне вара чупар-и,
Ача пек йăр хăварса...

* * *

Мĕн кăна пуль каламарĕ
Ун çӳхе тути.
Пурпĕрех вăл палăртмарĕ –
Мĕн вăл чун хытти?
Хытă-хытă ун чĕрийĕ –
Кăлттин çеç тапать.
Хитрелетнĕ çут чĕрçийĕ
Уçса хупăнать.
Темĕскер пур, тем каласшăн
Ик ура хушши.
Пурпĕр мар-и, эп пăхмастăп,
Çуккă чун хушни.
Чун хушать пач урăхла çав.
Ан, тет, ухмахлан!
Ху ална тытса эс чар та
Чĕп пек шăппăн лар.
Халĕ лăпкă, питĕ лăпкă
Калаçать тута.
Ман чунра та питĕ хăтлăн
Çаврăнать шăпа.

* * *

Хусанкай патне çывхартăм
Пĕр-ик утăм çех.
Аялтан пăхса шутларăм,
Туйрăм – пĕчĕкрех!
Эх, мĕн-ма санпа пĕрле эп
Пĕчĕк курăнап?
Е, чăнах та, эс мăнаçлăн
Тĕнчене куçлан?
Эп вара сана курап та,

Ăнланап хама.
Эс анчах мана тăнларăн,
Лартăн шăпланса...
Тĕнчере те кăшт шăпланчĕ,
Эп те пĕчĕк пек.
Пĕр-ик утăм çех тăватăп
Сан пата кĕçех.

* * *

Пăхса тăранма май çуккă тĕнче
Йăлтăртататать халь куç умĕнче.
Шакла кастарнă шурă хурăнсем
Пуçне тайса тăраççĕ майĕпен.
Çулсем таса. Пылчăк тени çукрах.
Çумăр çуса та тертлентерчĕ вĕт!
Утса пыран та, хăлхана çурать
Пăр ванчăк сасă. Кӳлленчĕк куçлă
Тĕнче пĕр çав тĕлте халь вăранать.
Çук, ку тĕнче куç пек çиçсе
тăрать!
Илсе каять халь тин мана инçет.
Сар çулçăсем халь тин курнаççĕ
Шыв ăшĕнче. Хăш-пĕрисем вĕсем
Асамлă пулăсем пекех ишеççĕ,
Пĕри ура айне лекет. Çук,
Тараймасть,
Çулçăсене кӳлленчĕк пуçтарать.

* * *

Пит аякра ман чун – пахча çути,
Эп лартнă йывăçсен шăв-шавĕ...
Пит аякра пулсан та çав таçта
çити,
Таçта çити каять çав чун пăлхавĕ.
Ак, эп утса тухатăп пахчана...

Пиҫсе ҫитен панулмисем ӳкеҫҫӗ
пат!
Ман чунӑм татӑлать ҫав вӑхӑтра,
Татӑлнӑ чух вӑл панулми пулса.
Ӳсеҫҫӗ пек-ха хурлӑхан та слива,
Чуна савать пӗртен пӗр ҫӳлӗ туя.
Ҫӗр тӗслӗ йывӑҫран пырса тытсан,
Ман чунӑм та ӳсет ҫав йывӑҫ
евӗр.
Тен, ҫавӑнпа ман чун – пахча
ҫути.
Вӑл аякра та пурпӗрех пӑлхавлӑ!
Пахча ӳстернӗҫем кӗрет пурнӑҫ
тути.
Те йӳҫӗ вӑл, тепӗр чухне пылак
та...

* * *

Эп роза умӗнче тӑратӑп.
Вӑл пысӑк мар. Ҫапах хитре!
Ҫак тӗнчене ҫӳлтен куратӑп –
Эп роза мар – чылай ҫӳлте!
Ҫеҫке ҫурать куллен ман роза.
Хӗрлӗ ҫеҫке ытла хитре...
Ӑна татма ҫитмест ман халӑм –
Татсан, пӗлетӗп, вӑл пӗтет.
Мӗн ма тесен, роза тӗнчи вӑл.
Ҫеҫке мана ҫӳле ҫӗклет!
Тен, ҫавӑнпа ҫын евӗрех
Ман роза ҫӳлеллех ӳсет.
Унпа пӗрле ӳсетӗп эп те,
Тӗнче те курӑнать ҫӳлтен.
Эп ун патне ирпе килеп те
Умне пырса тӑрап хуллен...

* * *

Шурă юр ӳкет те, канлĕн
Çывăрать тĕнче.
Тĕнчепе пĕрле пĕр танлă
Ман тапать чĕре.
Манăн чун та çывăрасшăн –
Ним те кирлĕ мар!
Тепĕр чух ним маршăн ассăн
Карăлать çăвар.
Юр ӳкет те шурă-шурă
Шуралать тĕнче.
Кун пеки тем чухлĕ курнă –
Парăнмасть чĕре!
Акă вăл тепре хаваслăн
Тапса илчĕ те,
Шур хĕл урлă тем кураслăн
Ыткăнать тепре.

* * *

Хĕл ларчĕ. Эпĕ те кăшт лартăм
Хĕлпе пĕрле тĕнче умне.
Унпа пĕрле кăштах калаçрăм
Хамăн та мар пурнăç çинчен...
Хĕл ларнă пек такам ларттарнă
Тĕнче умне мĕн пĕчĕкрен.
Мĕн кирлине йăлт тутарттарнă,
Тутарттарса мĕн виличчен.
Хĕл ларнă пек ларатăп халь.
Мĕн кирлĕ пулнă – йăлт çухалнă
Юр айĕнче те майĕпен...
Анчах, эс ан хăра, тăванăм,
Хĕл ларĕ те, хĕл кайĕ те...
Çуркуннепе вара юр айĕн
Шăтса тухать пуль ĕçĕм те!

* * *

Ман çырас килмест халь нимĕн те.
Шухăшăм та çук, пĕр туйăм та...
Тăтăм та çапла эп чӳрече умне,
Куçа ӳкрĕ хура каç, хула...
Йăлтăр-йăлтăр çутăсем каларĕç тем.
Машинсем вăркăнтараççĕ мĕн!
Ӳкрĕç те вĕсем ман куç умне,
Тем каласшăн пулчĕç йĕркипе.
Йĕрки-мĕнне! Йĕркесĕр ку тĕнче.
Эп кăна кăшт йĕркелетĕп мар-и?
Чӳрече умне тухни те хăй пĕрре
Тĕнчене йĕркелени пек пулчĕ.
Эх, тĕнче, пĕр кăмăллă пулинччĕ,
Çутатса кăтарт ху çуттуна каçпа.
Тен, вара çак хура каç, çак чӳрече
Манăн пулĕç чăннипе те ĕмĕре!

* * *

Каçсем килсе çапрĕç пуçран.
Çут кун та кĕскелчĕ...
Кĕскелчĕ пуль пурнăçăм ман,
Тем, калăн, вĕçленчĕ.
Пĕрех тепĕр чух юр çусан,
Çур кунĕ килет пек кăштă.
Чун кăшт хăпартланчĕ пулсан,
Вара пурăнма та пулать-тăр!
Ак, килчĕ пĕр кассăн çил.
Çилпе юр вĕçет хыттăн.
Хăрарăн-и? Çук, çил мар,
Çил мар халь мана хăратрĕ.
Çилпе эпĕ кайăттăм халь.
Анчах та чуна юр хупларĕ.
Тем пысăкăш кĕрт, пурнăç хытти,
Ăна нимле çил тапратаймĕ!

Хĕнпе те хурпа хытса ларнăскер,
Ухса ташласан та ватаймăн.
Ăт, çавă кăштах, хытса ларнăскер,
Вĕçме кансĕрлет çиле майăн.
Тен, килĕ-ха çур. Хĕвеллĕ кунта
Хытти те çемçен курăнкалĕ.
Ун чух, тен, çилпе. Çук, çилпе
Мар,
Çын куллипе юхса кайĕ!

* * *

Паян ман пата шăнкравларĕ
Тахçан пулнă çывăх тус.
Малтан вăл салам каларĕ,
Кайран ыйтрĕ çирĕм пус.
Ку, чăн та, чунран савăнтарчĕ.
Ăна тĕл пулман вĕт чылай.
Мĕн пулнă манпа – каламанччĕ –
Вăл хăй те вĕт пулнă таçта.
Пит лайăхччĕ çав, питĕ лайăх
Çав ырă туспа калаçма...
Мĕн-ма ун çапла сăпайлăн,
Çапла ыйтмаллаччĕ укçа?
Укçа ыйтсанах пирĕн туслăх
Çухалчĕ пулас çавăнтах.
Тен, тепĕр чухне аса илнĕн,
Пуçра çаврăнать шăнкăрав.

* * *

Çак пĕр буфет университетăн
Юрлать, хăпартланать...
Кунта килсе тухсан, студентшăн
Чи хăтлă вырăн туйăнать.
Кунта апат та мар, кунта
Тем тĕрлĕ ĕç тĕвĕленет.

Пĕри, акă, çырать, тепри юрлать –
Кунта хуçаланать студент!
Çак тĕнчере тĕвĕленет чĕре,
Студент чĕри – савăнăçпа тулли,
Кĕрекери пекех кĕрлет вĕрин.
Çĕр тĕрлĕ калаçу, кулли.
Çапла вăл университет хули!

* * *

Пăхса илтĕм тепĕр хут
Çакă мĕлкене.
Çуттăн çеç таçта мĕлтлетрĕ,
Е куç хупрăм эпĕ те.
Çав самант асамлă пулчĕ,
Пăхса илтĕм те тепре
Темĕнле пĕр йĕр хăварчĕ
Манăн сӳннĕ чĕрере...

* * *

Часах, часах çĕр тĕрлĕ тĕлпулу
Мана кĕтет пĕр тăхтамасăр.
Çĕр тĕрлĕ çынпала та калаçмасăр
Мĕнле чăтать чĕре пĕлместĕп хам та!
Çав чĕрере пуль упранать пĕлӳ.
Унта мĕн пур, уçса хуратăн та
Пĕлӳ тени хăех юхать шыв евĕр...
Хăй тĕллĕнех тухать кăмăл тени.
Кăмăл тени вăл хăй те пĕр ăнлав.
Кăмăл тупмасăр ăнланаймăн...
Çапла манра чĕреллĕ пĕр пĕлӳ,
Тата хушса хурам – кăмăлланать ăнлав.
Çавсем хуçаланаççĕ лекцире,

Вĕсемсĕр пулĕ пит кичем пире.

* * *

Тахçанхисем, хурăнлăхра тĕл пулнисем
Сасартăк сиксе тухрĕç куç умне.
Тахçанхи пек, ĕлĕкхи пек шап-шуррăн
Пуçне усать шур хурăн ир енне.
Мĕнле эс пурăнатăн, тет, пит тĕлĕнсе!
Ара, курманнисем çĕр çул та пулĕ...
Пăхатăп та, шур хурăнах, ĕлĕкхиех –
Ун çумĕнче нумай эс курнă ырлăх.
Ак, халь тăкать, тăкать ман пит çине.
Ай, кăтăклать ман питĕме шур юр!
Мĕн пулнă, иртнĕ, кайнă, халĕ мĕн,
Халь тин çав кăтăк кирлĕ мар та
пулĕ?
Çапах та кăмăллă, шур пас тытса,
Хура çĕр çинелле хуллен тăкса,
Эп ăнсăртран, кĕтмен çĕртен тĕл
Пултăм...
Тен, çавăнпа самантлăха хурăн пекех
эп шуртăм?

* * *

Кулса илтĕн-и эсĕ, хĕвелĕм?
Кулса илтĕм эп хам та сан пек.
Кĕлт пулсан та ман кăмăл çĕкленчĕ,
Кĕлт пулсан та тем пысăкăш эп...
Тахçанах çут хĕвелĕм тухманччĕ –
Кĕрхи кун ăмăрпа çав тулать.
Ак, паян вăл уяв пек тумланчĕ,
Паянтан вăл хĕвел пек çунать.
Çук ниçта та хура тĕм таврашĕ,
Ярса илнĕ пурне те шур пас.
Паянтан курăнать хурăнташăн

Шур пас тытнӑ хура катӑркас.
Эх, хӗвелӗм, сан пек ман куласчӗ,
Сан пекех питпеле сӑнланса...
Кулса илтӗм те, чӑн та, ӑнлантӑм –
Эпӗ хам та хӗвел пек пулас!

* * *

Хӗрарӑм сӑнӗнче шыратӑп
Тӑван ҫӗршывӑмӑн сӑнне.
Ун куҫӗнчен пӑхсан, куратӑп,
Тапса тӑран ҫут ҫӑл куҫне.
Кӑкӑрӗсем ун сӑрт-ту евӗр,
Айлӑмӗсем таса ҫаран.
Ҫӳҫ-пуҫӗ те – вӑрман, ку, тейӗр,
Аташтармалӑх пӗр кайсан...
Ал-урисем те ун, вар-хырӑм,
Ҫырма-ҫатра пек вырӑнсем –
Ҫап-ҫутӑ уйӑх пӑхса выртӗ
Ҫав хутлӑха мӗн каҫсерен.
Хӗрарӑм сӑнӗнче куратӑп
Тӑван ҫӗршывӑн сӑнарне.
Вӑл чӑнласах хитре пулсассӑн,
Тӑван хирсем те ман – хитре!

* * *

Хӗрсем хитре те, хитре мар та...
Кама мӗнле пуль? Тепӗр чух
Хитри ытла йӑлӑхтарать те
Хитре марри шутлаттарать...
Хитре марри сӑпайлӑрах пек.
Вӑл хӑй патне туртӑнтарть.
Мӗн-ма тесен, шалти хитрелӗх
Тулашринчен те лайӑхрах!
Ку, чӑнласах вӗт. Ҫут ҫанталӑк
Хӑйне пӑхсан, йӑлт ҫырлахать.

Эс чăнласах хитре пулас-тăк,
Ху çут çанталăк пул, хăвах!
Е çын пекрех, хытах калас-тăк,
Тен, чăн хитрелĕх çынлăхра?
Çав çынлăх мар-и чăн ахах пек –
Çавна пĕлместпĕр хаклама!
Хĕрсем хитре, хитре те мар пек...
Мĕнле куçпа пăхатăн, няк!
Хĕрсем хитре арçын пулсассăн,
Арçын хитрелетет сăна...

* * *

Сивĕ хĕл хĕррипе утса тухрăм.
Хĕррипе те тем чухлĕ илем!
Акă, пусрăм та кăшт шыва путрăм...
Сивĕ хĕл айккипе пылчăксем...
Эх. çемçе те иккен сивĕ хĕлĕм.
Чăн хĕрарăм чĕри пек çемçе!
Ăнсăртран çилпеле килнĕçемĕн,
Çунтарать хĕл тени ăш-чике.
Кирлĕ марччĕ халь тин çуркуннийĕ,
Кирлĕ марччĕ капла хĕл тĕрри.
Шуса ÿкрĕм те, ак, хĕл çиллийĕ
Пырса тытрĕ-и, тен, чĕререн?..
Шутарать хĕл хĕрри питĕ вăрттăн,
Шуть хĕрарăм пек йăлт шуçтарать.
Хĕл хĕрри пулчĕ пуль питĕ пылчăк,
Çавăнпа вăл мана хăратать!
Пурпĕр мар-и, шуса та ÿксессĕн,
Тепĕр хут эс тăран та утан...
Хĕл тĕрри тепĕр хут килсессĕн,
Аса илĕн çакна тепĕр чух!

* * *

Тарăхтарса çитерчĕ ку!
Ку, хура кĕр-тĕк, кĕр!
Кĕрр! кĕрлесе вĕрет те çил
Ӳкет шур юр çĕре...
Вара эс пылчăк çăрса пыр,
Хăвна çак пылчăкра çеç кур!
Эх, çăмăллăн утса каясчĕ,
Юр чăмакки пекрех пулса,
Санпа çаç çапăнса курасчĕ...
Чăлпарр! ман саланасчĕ те
Пĕртен пĕр çăлтăр куçсенче
Тупасчĕ сивĕ шур хĕле....
Пĕр çавăнта пур пек çăтмах,
Пĕр сивĕрех те, ăшăрах
Пулса ӳкет, ак, юр пĕрчи те...
Тарăхтарать ку хура кĕр!
Юр пĕрчи пек хĕле кĕретĕн...

* * *

Тăн кĕртет çанталăк.
Пурнăç тăн кĕртет.
Ху пулсассăн халлă,
Килĕ-ха кĕтрет?
Акă, юр ӳкет-çке,
Çумăр та çăвать.
Чĕре хăй пĕлет пек,
Темĕн тухатать.
Çумăр темех мар вăл,
Юр тесен, аван.
Ма тесессĕн, паллă,
Хĕл халь çывхарать.
Хĕлĕн пулмаллаччĕ
Хăта пек паян.
Ман та утмаллаччĕ

Йĕр туса аран.
Юрĕ тупăнмарĕ,
Йĕр тума май çук.
Чĕре тухатмарĕ,
Сăвă та тухмасть!

* * *

Хĕл килсе ларчĕ юттăн.
Кăшт, тен, тăван пек
Вĕлтĕртетрĕç юр пĕрчисем.
Çил куçне хĕсрĕ,
Куççуль кăларчĕ.
Хура пĕлĕтсем шуса тухрĕç.
Хĕвел таçта пăшăлтатрĕ
Ăшшăн.
Хĕл килсе ларчĕ хĕр евĕр.
Тасалăхĕ те ун!
Тен, çавăнпа юттăн
Курăнчĕ...

* * *

Хĕвел курман пек ăнтăлатăп
Хĕвелпеле пĕрле пулма.
Эп ун питне кăшт чуп тăватăп,
Пуça йăлт каçăртса тытса...
Хĕвел те кăмăллăн пăхать пек,
Вĕт вăл та тахçанах курман
Мана, çапла ача пек вăрттăн
Хĕвелпеле тăракана...
Хĕвел çутатрĕ – эп хĕвеллĕ,
Çунать чĕре хĕвел пекех!
Епле асаплăн кĕтнĕ пулĕ
Ун çутине кĕркуннерен...
Хĕвел çине, ак, юр та çурĕ.
Вĕлтĕртетет çеç юр пĕрчи.

Кашни пĕрчи хĕвел евчийĕн
Вĕçет пекех халь ман çине.
Эп каçăртса пуçа тăратăп,
Хĕвел-и чуп тăвать мана,
Е эп ăна нихçан курман пек
Йăлт чуп тăватăп ăнтăхса...

* * *

Пĕрре кеăна, çĕн çул тесе,
Телейлĕ пек пуласчĕ.
Анчах та çĕнĕрен нимле те
Чĕрчун урăх çуралаймасть çав...
Эпĕ вара, çĕн çул тесе,
Çуралтăм пулĕ тепĕр хут?
Çавна туйса, хĕпĕртесе,
Кĕтсе ларатăп çĕн çула.
Мĕн-ма тесен, эп тин çуралнă,
Эп халĕ пĕчĕк çеç ача.
Канхвет парсан та пит телейлĕ
Хама туятăп çакăнта.
Ак, мĕн тума çĕн çул вăл кирлĕ –
Ача пек тепĕр хут пулма!
Ача пулса хĕпĕртеме те
Çĕр çийĕн тепĕр хут утма...
Утар, апла, ак, çĕнĕрен
Хĕвел те тухрĕ мар-и тепĕр?
Ак, çĕнĕрен тапать чĕре,
Çĕн çул касне те кĕтнĕçемĕн...

* * *

Çĕнĕ çула пит çăмăллăн
Утса тухас пекех
Паян ирпе эп кăмăллăн
Пыратăп юр çинче.
Шур юр тин ӳкнĕ тейĕн,

Çемçен шăтăртатать.
Тен, тĕттĕм пĕлĕт айĕн
Хĕвел те хăпарать?..
Ăна эп пач курмастăп,
Халь пĕтĕтлĕ тăрать.
Çаплах эп хăрамастăп –
Теллейĕм тупăнать!

* * *

Чун кĕтсе илнĕ тăвăла
Тăнлатăп питĕ тимлĕн.
Пуш-пушă юлнă чунăмра
Вăл шăхăрать пит вирлĕн.
Ши-ши! таçтан илтет хăлха,
Шăлтăртатать чĕре хапхийĕ...
Нивушлĕ пирĕн таврара
Тĕнчен юлман хуппийĕ?

* * *

Каллех хĕлле.
Каллех çĕршывăм
Ахăлтатса кулать хĕр пек.
Хĕвел те питĕ илĕртӳллĕ,
Çав хĕр пекех савăнтарать...
Каллех хĕлле.
Пит хĕпĕртӳллĕн
Чупса пыратăп йĕр туса.
Мĕн-ма тесен таса иркӳлĕм
Юр çуса кайнă пĕр кана.
Ара, апла, тепре хĕрӳллĕн
Кулса илер-ха, чупнăçем.
Епле, чăнах та, хĕр упраçă
Кулать хĕле те курнăçем.

* * *

Çурхи хура кунсем
Çитрĕç ăнсăртран.
Эх, пуçларĕç те вĕсем
Ман чуна ташлаттарма...
Пĕлтĕр те çаплаччĕ вĕт-ха,
Питĕ йывăрччĕ мана.
Çулçăсен сап-сар вĕçевĕ
Пулăшсаччĕ кăшт кăна.
Халĕ тин вĕсем хуралнă.
Çĕрпе тан выртаççĕ, тен.
Урапа тапса пăхатăп,
Кĕлт тусан çĕкленĕçем.
Ах, турах, пăхсан, çĕр çийĕн
Тапнипех уçăлать, тен?
Çулçă çийĕн чун уççийĕн
Çĕкленет пĕр курăк çех.
Пĕчченех те питĕ чаплă,
Тĕсĕпе те çутипе.
Вăл мана тепре çĕклерĕ
Çак хура çуркуннепе.

* * *

Пĕлĕт ӳкет çĕр çине
Хăйĕн çутипе.
Уçса пăхас тенĕ пек
Унăн туприне.
Анчах çĕр тени çĕрех –
Кăтартмасть те уçтармасть.
Шыв тени вара кăштах
Мухтанса кăтартрĕ-ши?
Çут шыв çийĕн хумлăн-хумлăн
Пĕлĕт иртрĕ ишнĕçемĕн.
Ун çинче халь пĕр тĕнче –
Çав тĕнче уçать çĕре!

* * *

Çуркунне чăпăлтататчĕ çĕр çинчи
Пĕчĕк çеç пĕр кӳлленчĕкре.
Çӳлĕ пĕлĕтри тăри те пурччĕ
Шыв çинчи çав çутă тĕкĕрте.
Эпĕ те пырса пăхсан кăштах
Кĕрсе ӳкрĕм мар-и çав шыва?
Эх, чăпăлтататăп эп кӳлленчĕкре –
Çав кӳлленчĕкре вĕт пĕр тĕнче!
Шурă-шурă пĕлĕт шуса иртрĕ,
Сар хĕвел те мар-и кĕрсе ӳкрĕ,
Кĕрсе ӳкрĕ çут шевлен кӳлленчĕке,
Çавăнпа вăл халĕ пит хитре.
Халĕ вăл, чăнах та, пĕр тĕнче –
Çуркунне чăпăлтатать çав тĕнчере!

* * *

Мĕн кирлине пĕлес тесессĕн,
Мĕн пуррине çухатса пăх.
Мĕн çуккине те сисмесессĕн,
Пурнатăн ним пулман пекех.
Енчен те тем çухалсанах
Вилес пек шырама пуçлатăн.
Апла, чăнах, мĕн кирлине
Чунпа та ăнланса илетĕн.
Çапла ман пурнăçра пĕр пулăм
Пулса иртсессĕн ăнсăртран,
Мĕн кирлине эп тин ăнлантăм –
Çухатнăçемĕн тупрăм та!
Хам арăма кĕтмен çĕртен
Чутах эп çухататтăм вĕт.
Юрать вăхăт тупса часрах
Леçсе хăвартăм сипленме.

Ăна унта касса пăрахнă.
Хырăмĕнчен тем чуль кăларнă,
Пĕр ывăç шак чулсем....
Çавсем иккен ăна аптратнă!
Халь ал çинче кăшт вылямалăх
Каллех ача пек шак чулла
Пăхса выртаççĕ ман куçран –
Епле, чăнах та, пит хитре
Выртса вĕсем ват ăшĕнче.
Халь тин пĕлеп арăм мĕнне,
Çак çĕр çинче мĕн кирлине.

* * *

Вĕрене, эс мана манса кайнă пулас.
Эп вара улшăнман, никама та манман.
Ак, хĕвел ир енне йăлтăрса пăхнă чух
Аса илтĕм сана анне майлă...
Ас тăватни, тахçан эп кунта утнă чух
Кашни ир пуç çапса эс тăраттăн.
Ак, паян та çапла, ĕлĕкхи евĕрлех
Çеçкене эс сарса та кăтартрăн.
Çавă пулчĕ-и, ку, эс мана юратни,
Сар çеçке пек пулса-и таптантăн?
Ах, иртен-çӳрекен, эс мĕн-ма çеçкене
Телей пек упрама та пĕлмерĕн?
Ах, пĕлемерĕм çав эп сан пек
пурăнма
Çеçкеме те тăкмарăм ир енĕн.
Кам-ха халь пуçтарать ура айĕнчен
Ванса пĕтнĕ чуна, вĕренеçĕм!

* * *

Кăвак-кĕрен, сап-сарă та сип-симĕс
Чечек тапса тухсассăн вăрманта
Ĕне çимелĕх пур-ха чаплă çимĕç

Текелесе утатпăр... Катара
Телей тупмалăх пурччĕ хутлăх.
Ват шĕшкĕ айĕнчи çулçăсене сирсен,
Темле ахах пĕрчи пекех эс тупнăн
Хăвна туйса тăратăн... Тепререн
Татах, татах сиксе тухать сар мăйăр.
Ăна вăрман патши пакша та тупайман!
Вăрман патши пекех эпир те хамăр
Çӳретпĕр савăнса... Ĕне çиет пĕр тапхăр
Унтан выртса канать. Эпир вара
Вылятпăр çĕçĕлле пĕр картана ларса,
Çиетпĕр мăйăр. Кам мĕн тупнă ĕнтĕ.
Çав авалхи сар мăйăр тутине
Туйса илетĕп тепĕр хут та тупнăн,
Кăвак-кĕрен, сап-сарă та сип-симĕс
Чечек татма кĕрсессĕн вăрмана.

* * *

Килчĕ тĕтреллĕ тĕнче.
Пĕлĕт анать тӳперен.
Шурă тĕтре ăшĕнче
Тополь тăрать пĕччен.

Тополь тĕревĕ пур.
Вăл тĕреклет тĕнчене.
Симĕс çулçийĕ, кур,
Халь кăтăклать тӳпене.

Тăтăм пăхса тополе,
Тултăм çулçи шăршипе.
Тухрăн пулать ирĕке
Çакă кун-çул еккипе?

Кайрăм эп халь çуталса

Йывăçăн чăн çутипе.
Тополь юлать шутласа,
Çулçă мĕн чуль тухнине...

* * *

Хĕвел çине пăхса юрлаттăн юрруна.
Эх, кăтартаттăн эс хăвна та халăхна та!
Мĕн-ма тесен сассу сан çĕр сассиччĕ,
Мĕн-ма тесен чĕлхӳ сан çĕр чĕлхиччĕ.
Итлерĕм пĕринче кĕтмен çĕртен пĕр
Сăввуна.
Вуларăн эс ăна çурхи шыв пек асса
Кайса.
Кĕрлере сăввунта аслати пек аваллăх,
Эс тытнă шухăшра хама курса пĕр
харăс.
Эх, Хусанкай, сан пеккисем тек çуккă
çав!
Вăхăт юххи юхтарчĕ пуль сана та шав!
Çапах та эс пĕтмерĕн-ха, шавларăн,
Пирĕн пата килсе тепре сас патăн...
Тавах сана, поэтăмăр, хастарлă сан чуну.
Çĕклет пирĕн чуна та тепĕр хут.
Вула, апла, вула! Сăввусенче тупатпăр
Татах та пурăнмалăх çĕн вăрманлăх.

## ТУПМАЛЛИ

1. Юр çунă чух ку шухăш кĕчĕ........................3
2. Чăнах та, пур-ха шур хĕрсем.....................4
3. Вăхăт иртет, иртнĕçемĕн,............................5
4. Хĕл ларчĕ пуль. Çăвать шур мамăк.......................................................6
5. Чăваш поэзийĕ çул тăршшĕн........................6
6. Пĕр сар купа..................................................6
7. Килсе туртать пĕр хĕрача пирус,....................................................7
8. Тахçантанпах шутлатăп эп..........................7
9. Шăппăн-шăппăн, питĕ шăппăн....................8
10. Ку хуçалăх çулĕсем......................................8
11. Кĕрет сăрхăнса кăвак çутă,......................9
12. Юр çăвать, çăвать, çăвать........................9
13. Хура халăх, тетчĕç..............................10 Ăнланмастăм.
14. Ан шутла, лайăх çыртăм тесе,...................11
15. Нимле чару та çуккă сан..........................11
16. Ку тĕнчере – чăн вырăнта.......................12
17. Хурасем таçтан килнĕ пулать....................12
18. Ăçта-ха çӳрет ман чăваш,..........................13
19. Мĕн асăрхатăн пурнăçра?..........................14
20. Хĕрача çинчен çырмасăр...........................14
21. Турă тесе эп шутланă...............................15
22. «Тешуб», «Тешуб» тени тахçан..................15
23. Ан васка, тет, ман юлташ..........................15
24. Çеçпĕл утать хĕллехи урампа,....................16
25. Юр ӳкнĕ тĕлте урăх нимĕн те çук.............17
26. Тĕксĕм, тĕтреллĕ, кичем...........................17
27. Мĕн-ма калаççĕ: пăлхартан........................18
28. Юр çине ӳкеççĕ сарă çулçăсем..................19

29. Хура вăрмансем халь те куç
умĕнче....................................19
30. Юнран та ыйтсан, мĕн
калăттăн эс?...............................20
31. Такам пулса эс çӳресен те,...........................21
32. Уçă çил çĕкленчĕ пек.................................21
33. Пĕрре çавăрса çапсан, ак,............................22
34. Вĕлтĕртетрĕ вĕрене вăрри.............................22
35. Урам урлах ман тусăм.................................23
36. Ташлаттарать çав пурнăç çулĕ,........................23
37. Тĕттĕмрен, тĕттĕмрен илсе
тухрĕç çулсем..............................24
38. Темскер, таса мар эпĕр халь..........................24
39. Тĕтреленчĕ тĕнче, тĕтреленчĕ.........................25
40. Эп пурнатăп таçта. Эп пĕлместĕп......................25
41. Ирĕлет шур юр паян...................................26
42. Эп тахçанах çырманччĕ................................26
43. Пĕлместпĕр эпĕр нимĕн те ............................27
44. Пурччĕ-ха аякра-аякра пĕр тĕлленчĕк..................27
45. Çитет, çитет ман вăхăт...............................28
46. Юр выртрĕ, выртрĕ, выртрĕ............................28
47. Улмуççисем юр айĕнче... Юр хупăрларĕ.................29
48. Ку тĕтреллĕ тĕнчере..................................29
49. Хĕрачасем таçтан тем сăнлă ..........................30
50. Янăрать вăрман... Шоссе хĕрринче.....................30
51. Тĕлĕнмелле çанталăксем...............................31
52. Ах, пурнăç тенине пĕлесчĕ............................32
53. Çук, урăх нимĕн те туйман............................32
54. Хальхи вăхăтри çынпа.................................33
55. Сăвă çырас терĕр-и?..................................33
56. Кӳренни вăл тем мар..................................34
57. Вĕлтĕртетет кĕрхи çанталăк,..........................35
58. Çил çинче те тăма çăмăл мар..........................35
59. Иккĕнтен татаççĕ шур çырла...........................36

60. Эп утса çӳретĕп ĕлĕкхи çĕртех....................36
61. Никам та килмерĕ вĕт, пăх-ха....................37
62. Канлĕн кăна утса тухрĕ............................38
63. Хурăн шутлать, темскерлĕ............................39
64. Чĕлтĕртетет тумламăн..................................39
65. Йĕпе-сапаллă пурнăçРа...............................39
66. Кĕрхи кунсем килсе çитсен,..........................40
67. Кăларасшăн кăчкă кашни кун.......................41
68. Хĕл лармарĕ халĕ те....................................41
69. Хура кĕр çинчен кам çырнă..........................42
70. Ăнланма та хĕн, мĕн-ма..............................42
71. Аякра-аякра, шухăшлатăп пĕрмай................43
72. Кирек мĕнле шухăшăма,..............................43
73. Хура халăх тени питĕ вăйлă.........................44
74. Никам та çуккă. Кирлĕ мар..........................45
75. Тепĕртакран, тепĕртакран............................45
76. Пур ырă çынсем. Çук мар............................46
77. Йĕпе-сапа, сапа, сапа..................................47
78. Карталанчĕ шурă уйăх.................................48
79. Уйăх та хĕвел, уйăх та хĕвел.......................48
80. Юр çукалать. Тăрать тĕтреллĕ.....................49
81. Ахальтен çырса лармастпăр.........................49
82. Хĕрарăм чĕрисем хăватлă............................50
83. Кирлĕ мар мана пушмак..............................51
84. Халь тин темĕн чухлĕ йыхрав ман.............51
85. Ас тăватни эсĕ,............................................52
86. Çук, кирлĕ марччĕ, тусăм,............................53
87. Юлашкинчен пăхса тăрантăм.......................53
88. Чăнах та, чăнах та, чăнах та.......................54
89. Çывăхрах ман савнă тусăм,..........................55
90. Питĕ сивĕ, сивĕ, сивĕ..................................55
91. Тул çутăлать. Ĕçе кайма та вăхăт..............55
92. Урамра сивĕ хĕл ларнă чух.........................56
93. Авалхи сăн, курап, килет............................57
94. Юр ӳкмерĕ. Çук, ӳкмест.............................57

95. Пĕр сивĕ хĕл пĕр машинран......................58
96. Хитре, хитре теетпĕр те..............................59
97. Ку хитре тĕнче çинчен................................59
98. Тĕттĕмленет çĕршыв картийĕ......................60
99. Ĕмĕтленме аванччĕ те.................................60
100. Хĕвел çапать ку тĕнчене............................60
101. Эй, сив çапать çав кантăкран.....................61
102. Урăх ним те çуккă, çуккă...........................61
103. Пулать пĕр вăхăт питĕ майлă....................62
104. Утма çăмăл мар иккен...............................62
105. Шкул патнелле çывхарнăçемĕн,..................63
106. Эх, ачамккă, халăх сăнĕ............................64
106. Хĕлле... Питĕ сивĕ çĕрте............................65
107. Кăлтăр-кăлтăр! питĕ лайăх.......................65
108. Мĕн çинчен çырман-ха эпĕ,........................66
109. Хĕл пилĕкĕ ытла та авăк...........................66
110. Ачашшăн, ачашшăн хĕл килчĕ....................67
111. Кил асамĕ ман чунра ..............................67
112. Юлашки сăвва çыратăп.............................68
113. Чĕлхе çинчен тепре шутларăм,....................68
114. Чĕрем пĕтменшĕн савăнатăп.......................69
115. Шăплăх хуçаланать чунра..........................69
116. Тĕнче туталлă та çут куçлă.......................70
117. Кĕрхи çулăм чуна ярса илчĕ.......................70
118. Аякра, аякра... Çăлтăр каçĕ чунра..........71
119. Ылтăнлать тĕнчене кĕркунне....................71
120. Шăл йĕрсе тăма аван................................72
121. Çанталăк тăрать ырă...............................72
122. Кĕркунне, шур юр ӳксессĕн,.....................73
123. Хура кĕр килет – хуплать..........................74
124. Мĕн кăна пуль каламарĕ...........................74
125. Хусанкай патне çывхартăм........................75
126. Пăхса тăранма май çуккă тĕнче...............75
127. Пит аякра ман чун – пахча çути,............76
128. Эп роза умĕнче тăратăп...........................77

129. Шурă юр ӳкет те, канлĕн.....................77
130. Хĕл ларчĕ. Эпĕ те кăшт лартăм............78
131. Ман çырас килмест халь нимĕн те.........78
132. Каçсем килсе çапрĕç пуçран...................79
133. Паян ман пата шăнкравларĕ...................79
134. Çак пĕр буфет университетăн..................80
135. Пăхса илтĕм тепĕр хут............................80
136. Часах, часах çĕр тĕрлĕ тĕлпулу..............81
137. Тахçанхисем, хурăнлăхра тĕл пулнисем....81
138. Кулса илтĕн-и эсĕ, хĕвелĕм?...................82
139. Хĕрарăм сăнĕнче шыратăп.......................82
140. Хĕрсем хитре те, хитре мар та...............83
141. Сивĕ хĕл хĕррипе утса тухрăм................83
142. Тарăхтарса çитерчĕ ку!............................84
143. Тăн кĕртет çанталăк...............................85
144. Хĕл килсе ларчĕ юттăн...........................85
145. Хĕвел курман пек ăнтăлатăп...................86
146. Пĕрре кейăна, çĕн çул тесе,......................86
147. Çĕнĕ çула пит çăмăллăн..........................87
148. Чун кĕтсе илнĕ тăвăла.............................87
149. Каллех хĕлле.........................................88
150. Çурхи хура кунсем.................................88
151. Пĕлĕт ӳкет çĕр çинее.............................89
152. Çуркунне чăпăлтататчĕ çĕр çинчи.............89
153. Мĕн кирлине пĕлес тесессĕн,....................90
154. Вĕрене, эс мана манса кайнă пулас..........90
155. Кăвак-кĕрен, сап-сарă та сип-симĕс...........91
156. Килчĕ тĕтреллĕ тĕнче..............................92
157. Хĕвел çине пăхса юрлаттăн юрруна..........92

## Желтов Михаил Павлович

# Кун хыççăн кун

## День за днем

### Стихи на чувашском языке

Печать принтерная
Бумага принтерная
Тираж 20 экз.
Самиздат «Семья»